К84 09
С30
И-42048



Национальная библиотека ЧР
4-042048

ВОЗВРАТИТЕ КНИГу НЕ ПОЗЖЕ
обозначенного здесь срока

Моргаушская типография Зак. 1296 Тир. 10.000 1981 г.

ОБЯЗАТЕЛЬНЫЙ
БЕСПЛАТНЫЙ
ЭКЗЕМПЛЯР

**Юрий Сементер**

# ÇИÇĔМ САПАКИ

**Тăватшар йĕркеллĕ сăвăсем**



Шупашкар
Чăваш кĕнеке издательстви
2009

ОБЯЗАТЕЛЬНЫЙ БЕСПЛАТНЫЙ ЭКЗЕМПЛЯР

УДК 821.512.111
ББК 84 (2Рос=Чув) 6-5
С 30

ПРОВЕРЕНО
20 10 21 СЕН 2017

ч-42048

НАЦИОНАЛЬНАЯ БИБ... ЧУВАШСКОЙ ...ЛИКИ

**Сементер Ю.С.**
С 30 Çиçӗм сапаки: Сӑвӑсем. — Шупашкар: Чӑваш кӗнеке изд-ви. — 223 с.
ISBN 978-5-7670-1631-0

Чӑваш халӑх поэчӗн Юрий Сементерӗн çӗнӗ кӗнекине тӑватшар йӗркерен тӑракан сӑвӑсем кӗнӗ.

Хайӗн кӗске хайлавӗсенче çыравçӑ чӑваш çыннин паянхи шухӑш-кӑмӑлне, пурнӑçри туртӑмӗсене, туслӑхпа юратури ӑнлавӗсене сӑнласа кӑтартать, халӑхӑмӑрӑн авалхи тата хальхи йӑли-йӗркине философилле куçпа пӑхса пахалать.

**УДК 821.512.111**
**ББК 84 (2Рос=Чув) 6-5**

**ISBN 978-5-7670-1631-0**

© Ю.С. Сементер, 2009
© Чӑваш кӗнеке издательстви, 2009

3

## Тухăç йыхравĕ

«Çывăх вăхăтра тухăçалла çул тытма кăмăл пур-ха...» Çапла пĕлтерет хăйĕн юлташĕсене аслă Пушкинăмăр 1833 çулта. Пăкачав пăлхавĕн йĕррисемпе çӳренĕ май вăл Шупашкарта, Хусанта, Чĕмпĕрте, Ăрĕмпурта, ытти хуласенче пулать, Атăлпа Урал хушшинчи халăхсемпе — çав шутра чăвашсемпе те — калаçать, çыравçăсенчен Александра Фукспа, Николай Языковпа, Дмитрий Ознобишинпа курнăçать. Байронпа Гетене канăç паман пекех, тухăç сывлăшĕ Пушкина илĕртнĕ те йыхăрнă, хăйне майлă хавхалану кӳрсе тăнă. Вăл пирĕн Никита Бичуринпа туслă çыхăну тытни те, унăн пултарулăхĕнче тухăç кĕввисем тăтăшах тĕл пулни те çакнах çирĕплетеççĕ.

Европăшăн, Мускав Руçĕшĕн тухăç çĕрĕсем Пăлхар патшалăхĕ пулнă вырăнтан пуçланса каяççĕ. Пиншер те пиншер çухрăма тăсăлать аслă тĕрĕк тĕнчи. Кунти халăхсен сăмах пултарăвĕ пĕтĕм ӳнерлĕхе хăйне евĕрлĕ кăмăлтуйăмпа, сăнарлă шухăш эрешĕпе пуянлатса тăрать. Паян пирĕншĕн Рудаки, Саади, Хафиз, Омар Хайям, Навои, Фирдоуси тата ыттисен ячĕсем поэзи тӳпинчи чи çутă çăлтăрсемпе танах.

Тĕрĕк чĕлхиллĕ халăхсен литературисенче хальхи ăрури поэтсем те сăмах ăсталăхĕн авалхи меслечĕсене ăнăçлăн малалла аталантарса пыраççĕ. Пирĕнпе пĕр ӳсĕмри

Абдулла Арипов узбекăн, Лоик Шерали таджикăн, Оразгулы Аннаев туркменăн, Равиль Бикбаев пушкăртăн, Равиль Файзуллинпа Ренат Харис тутарсен сăвви-юрри çак тĕлĕшрен илсен пысăк хака тивĕçекен пуянлăх пулса тăрать.

Хамăрăн чăваш поэзийĕ тесен, тухăç туртăмĕсем уйрăмах Константин Ивановпа Шелепи, Хусанкайпа Ухсай, Миттапа Анатри, Тукташпа Урташ, Эйзинпа Исмуков, Ираида Петровăпа Любовь Мартьянова сăвви-поэминче палăрса тăраççĕ.

Шухăша мĕн май килнĕ таран кĕскен çавăрса калас тĕллев мана та канăç паман. Çавăпа та вăл туртăм тилхепине эпĕ асран та, алран та пĕрре те яман темелле. Ярăмăн-ярăмăн хаçат-журналта та, сăвă пуххисенче те пичетленсе пынăччĕ унашкал хайлавăмсем. Халĕ вара, ĕçĕм-пуçăма пĕтĕмлетес вăхăтсем çывхарса çитнĕçемĕн, çав тăватă йĕркеллĕ сăвăсене пĕр кăшăл туса кăларас терĕм. Вĕсене эпĕ хăçан çырни тата мĕн çинчен çырнине кура уйăрса тăмарăм.

Акă ĕнтĕ, хаклă вулаканăм, çак кĕнеке сан аллунта. Тăнăçлă та меллĕ вăхăт пултăрччĕ унпа паллашма.

Тăванла кăмăлпа хисеплĕн пуç тайса —

*Юрий Сементер.*

# ТЕЛЕЙ ХЫПАРĔ
# ЯЧĔ ĂШĂ ÇИЛ

* * *

Çулатăп утă — шухăш сан çинче,
Юрлатăп юрă — шухăш сан çинче.
Тĕнче тени санран тăрать пуль, тусăм,
Мĕн-ма тесен пур шухăш сан çинче.

* * *

Сирсемччĕ йывăр шухăшна, пикеçĕм,
Çаран çинчи ытарайми чечекĕм,
Хăвна хĕвелĕн куракан çынна
Епле туймастăн эс, кĕрен çеçкеçĕм?

* * *

Телей хыпарĕ ячĕ ăшă çил,
Юррипеле сар кайăк пачĕ пил.
Чуна мĕн кирлĕ — пур те пур, савниçĕм,
Эппин, часрах хĕвел пек тух та кил.

* * *

Ялан вӗрен те асӑрхан, сӑна,
Таçта та тӗрӗслев кӗтет сана, —
Мӗнле асамлӑ туйӑм юрату,
Майне пӗлмерӗн — пӗтерет çынна.

* * *

Тӑвӑлсем хыçӗнчен — тӑванла çураçулӑх,
Çурпала кӗр хушши çиçӗм çиçнӗ пек çывӑх.
Эс манпа юнашар, эп санпа юнашар,
Юрату шерепи — пирӗн ырлӑх та... çылӑх.

* * *

Кашнин пур Турӑ çыракан çынни:
Пӗр саншӑн çеç ун пӗтӗм ырлӑх-варлӑхӗ.
Эпир çав мӑшӑра тупайманни —
Тӗнчен чи пысӑк тӗрӗс марлӑхӗ.

* * *

Сан хăлхунта — кăвар пек йĕрĕлче,
Епле мухтамăн ун йышши ĕнче?
Хĕвел пикеçĕм, — хам ăшра шутлам-ха, —
Ĕнчӳ сан пур-ши чун пайăркинче?

* * *

Шап-шур çеçке — салтак тӳмин харши,
Пуç кăшăлĕ çыхсан мĕн калăр-ши?
Юрать те пуль... Анчах та сар савнин
Чи юратни — йăмра кăчкин шăрши.

* * *

Сăну хĕвел чечекĕпе танах,
Сассу юхать çăлкуç юрри майлах.
Ахахăм-ĕнчĕм, ирĕк пар, тархасшăн,
Сан илемӳ çинчен пуçлам сăмах.

* * *

Аван космонавта ыталасси,
Аван министра ал парасси,
Унтан та аванрах, эй, тăвансемĕр,
Хĕре телей сăмахĕ каласси.

* * *

Пурнас тесессĕн çынпала тату,
Тăванăм, сăмахран эс юрă ту.
Чунра хĕвел çеçке çурать пулсассăн
Пирте епле ан çиçтĕр юрату?

* * *

Пур çăлтăрсен хĕлхемĕ — куçунта,
Кайăк юррин илемĕ — чунунта,
Çакăн çинчен эп мар пулсан, пикеçĕм,
Тата кам калĕ хăвăн умăнта?

* * *

Хиселлĕ тухăçри ăс-хакăл çӳллĕш,
Мухтавлă анăçри ăс-хакăл çӳллĕш.
Пире ку таранччен чипер усранă
Хăй сăнлă та хăй чунлă Чăваш Шульĕш.

* * *

Кăтрак пире илсе хăпарнă çул,
Кĕçех пулса юлать, тен, йывăр чул.
Атăл атте, чăваш аваллăхне
Пин çуллăх упраканĕ эсĕ пул.

* * *

Сар ярăмсем çине пăхса тăнла,
Хăй тухăçне курса юрлать хăмла...
Кĕр мăнтăрĕ çапла килет пулсассăн
Мехелĕпе уяв та тумалла.

* * *

Салам сана салма пек, сар кĕлет,
Алăкунта пуç тайăлса илет.
Нумай та пĕтĕ, сахалли те çитĕ, —
Çынпа чипер пурăннинче тивлет.

* * *

Эп çĕр çинче пурне те хурăнташ,
Хура е сарă çын — пĕрех çулташ.
Мĕн авалтан пурнатăп çакăнта,
Туссем, паллашăр, пĕлĕр: эп — чăваш.

* * *

Йĕтем çинче паян çапаççĕ авăн,
Тăпачăсем епле ташлаççĕ, савăн,
Салат хурса часрах сăра юхтар,
Кăмăлĕсем ĕç çумĕнчех уявăн!

*   *   *

Чунра тасах юлсассăн тивĕçӳ
Хăрушă пулмĕ саншăн кĕвĕçӳ.
Сăмах вăл юр пĕрчи пекех вылянĕ,
Пурне те сирĕ сутăнми ĕçӳ.

*   *   *

Хум çаврăнса çитсессĕн çырана
Пĕрре пырса çапать те — саланать.
Этем ĕмри те шутласан, тăванăм,
Çыран хĕрне çитес самант кăна.

*   *   *

Эх, шăнкăр-шăнкăр шыв юхать тесе
Пăхса ларатăн эсĕ киленсе.
Мĕн савăнан, пурнас куну-çулу
Юхать çав шыв пек тĕпсĕр тинĕсе.

* * *

Айта, тăванăм, çаврăнса пăхар:
Ăçта паян хасар, ăçта пăлхар?
Ни вăл, ни ку ниçта та курăнмаççĕ,
Эппин, çулташ, чăн-чăн чăваш пулар.

* * *

Тавах, нуша: кулач чĕлли тыттартăн,
Тав, юрату: яш чунăма вăратрăн,
Тăшманăм, кил, сана та ал парам:
Мана эс тăп выртас çĕртен тăратрăн.

* * *

Туйса илсессĕн чунăм çунатне
Вĕçетĕп эпĕ хамăр ял патне.
Кайса ӳксен те йывăр çул çинче
Аса илетĕп хамăр ял ятне.

* * *

Ывăл ачишĕн амăш те явалпă,
Ашшĕ вара — икĕ хутчен явалпă.
Анчах çын тăрăшни парать-ши усă
Хăй чунĕнче пач пулмасан явалпăх?

* * *

Авал кам хăйĕн лашипе мухтаннă,
Ялта-йышра çав çур ухмах шутланнă.
Арăмĕпе каппаякан вара
Яланлăх тăр ухмах ятне туяннă.

* * *

Паян мĕнле татсах çирĕплетер?
Ытла мухтанас мар тăк Михетер
Нарспи умне килсе тухас элчел те
Çаплах хăрушă пулмĕччĕ эхер.

* * *

Май пур çĕрте чĕрре кĕрсе ан тупăш,
Сиси-сисми пĕр утăм чакнăн ту кăшт,
Мĕн, уншăн хăй чысне-ятне ярать-им
Санра яланлăх тĕвĕленнĕ шухăш?

* * *

Яшкалăх çăнăх пулнă пек яшкалăх,
Ӳнершĕн çук нихçан та пĕр вăшкаллăх:
Степан Максимов — ĕмĕрех Максимов,
Ун тусĕ Павлов — ĕмĕр Хветĕр Павлов.

* * *

Пĕрмай мухтаннинче, туссем, мĕн пăсăк?
Калать те — ĕненме пуçлать çав кăсăк.
Кайран çав шухăш унăн пуçĕнче
Яланлăхах юлас хăрушлăх пысăк.

* * *

Тăван вилсен ай-яй чун хурланать,
Тăр кăнтăр тĕлĕнчех хĕвел анать...
Анчах ăна çĕре чипер кĕртсессĕн,
Ĕç тунă евĕр, кăмăл лăпланать.

* * *

Шурăмпуçсем хăпариччен, малтан,
Мĕскер каласшăн-ши пире автан?
Автан пире каласшăн: «Эй, этем,
Ĕмрӳ иртсе пырать, часрах вăран!»

* * *

Кирлех-ши халĕ сăвăлла роман?
Ăна вула-вула тăнран тухан.
Тăват йĕрке — çут çиçĕм йăлтăркки,
Пăхса илен те — шухăша путан.

* * *

Омар Хайям çăлтăрçăра ĕçленĕ,
Вăл çăлтăрсем калаçнине итленĕ.
Çӳлти вăрттăнлăха ăнланнăран
Тӳпе ăна поэт пулма пилленĕ.

* * *

Сасартăк çиçрĕ тӳпере хĕлхем.
Шутларăм: ак вăл ман пулас калем!
Тӳпе каларĕ: «Шухăшĕ килсессĕн
Хăй чĕлхине хăех тупать этем».

* * *

Тăвата йĕркере — хĕвел хĕлхемĕ,
Чун çиçĕмĕн йăл-йăл çиçен сĕвемĕ.
Ăçта-ши чунĕ хăй? Тен, çăтмахра?
Пирте — ун ылтăн пайăркин илемĕ.

* * *

Ыран мĕскер пулассисем йăлт паллă:
Сакки туратлă, çулĕсем тумхахлă.
Кун-çул тӳпе ирĕкĕпе пырсассăн
Мĕнре вара манран килен яваплăх?

* * *

«Аттей-апай» текен тӳлек кĕтесĕм,
Хĕвеллĕ лириксем ӳстертĕн эсĕ.
Ивник, Янкас, Тукташпала Айташ —
Чăваш кĕтречĕн йăлтăркка хĕресĕ.

* * *

Кам эсĕ? Пĕтĕмпе те çын кăна,
Анчах шута илес пулать çакна:
Упи те, арăсланĕ те, тилли те
Паян куçран пăхса пурнать сана.

И-42048
НАЦИОНАЛЬНАЯ БИБЛИОТЕКА ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ

* * *

Çак чăнлăха, тăванăмсем, астăвăр,
Ун тĕшшине пуласлăха та хывăр:
Килĕшӳпе пурнан тĕнчемĕр — аслă,
Хирĕçӳпе пурнан тĕнчемĕр — тăвăр.

* * *

Кĕрекере шавах тулать черкке,
Кунра-çулра — урăхларах йĕрке:
Пĕр хавшасассăн кăкăрти хевтемĕр
Çумра çĕнетекенĕ çуккă-çке.

* * *

Исмай, эс юратсах çийӳçĕн чăкăт,
Тĕнче çине пăхса илсемччĕ йăпăрт:
Эпир кунне виç хут апатланатпăр,
Пире пĕр чарăнми чăмлать-мĕн Вăхăт.

* * *

Çыран енне хур кайăк йышĕ евĕр
Вĕçе-вĕçе пыратăр та, хумсемĕр,
Чăл-пар кăна каятăр саланса...
Çав хум пек мар-ши эсĕ те, ман ĕмĕр?

* * *

Якур яла пăтратрĕ тăршшĕпе,
Микул яла çĕклерĕ ĕçĕпе...
Масар çинче выртать халь ик ентеш
Тăванлă, туслă икĕ кÿршĕ пек.

* * *

Çĕр чăмăрĕ арман пек авăрать,
Хăйне çеç мар, пире те çавăрать:
Тин килнинчен кĕçех ват çын тăвать,
Ват çыннине тăпра пулма ярать.

* * *

Венчет тутарнӑ чаплӑ сехетре
Эп илтӗм сан ҫӗрре, эс — ман ҫӗрре.
Ҫапла чи аслӑ чӑнлӑх умӗнче
Пӗр-пӗринпе ылмашрӗҫ ик чӗре.

* * *

Хӑш чух этем чунпа курать аван,
Курать те — сас парать пин ҫухрӑмран.
Ахаль-им ыталать Шелепие
Лезгин Гомерӗ Стальский Сулейман?

* * *

«Ҫыр, ҫыр» тени хуллен таҫта ҫухалчӗ,
Ирхи тӗтре пек сирӗлсе тамалчӗ.
«Ан ҫыр, пулмасть санран» тени вара
Ҫил-тӑвӑлра ҫунат сарма вӑй пачӗ.

* * *

Ку юрату — чăн ултавпа пĕрех,
Паян çакна ăнлантăм эп ирех.
Нушапала асап тыткăнĕнче,
Тен, лăплантарĕ чунăма эрех?

* * *

Пĕр çирĕм çул та пулĕ ĕлĕкрех
Эп Сталинпа пуплерĕм тĕлĕкре.
Каларĕ вăл: «Чăвашăн усалли те,
Ырри те — пĕтĕмпех тӳлеклĕхре».

* * *

Пин тĕрлĕ, пин чĕлхеллĕ халăха
Пĕрпеклетет иккен айван хавха:
Çут черккине ытлашширех хурсассăн
Тухса каятпăр пурте ухмаха.

* * *

Михуть, тĕнче тавра çаврăннăскер,
Ял çăлкуçне каларĕ ак мĕскер:
— Сан шывусем каяççĕ те — килмеççĕ,
Эп ак кунта ларатăп чип-чипер.

* * *

Вĕт шывсем пек пĕрлешрĕмĕр эпир,
Мăн шыв пулса кĕрлерĕмĕр эпир.
Тинĕселле юхса кĕрес чухне
Атăл вăррин пайлантăмăр эпир.

* * *

Такам манра тупас тесен те айăп —
Хĕвеллĕхшĕн эп хĕвелех пуç тайăп.
Пур ĕненӳн те никĕсĕ — сăмах,
Çак ĕненӳпелех эп килĕп, кайăп.

* * *

Ик пичке — ик пĕлĕш — юнашар.
Чăп туллийĕ — лăпкă яланах.
Леш, пушши, чăн-чăн карма çăвар —
Çуйхашать çил тухнă-тухманах.

* * *

Черечĕпе каймасть-мĕн килекен,
Суйла-суйла кĕртет-мĕн чĕнекен.
Анчах хăй çĕклейми парсан та ылтăн
Вăл вилĕмрен хăтараймасть иккен.

* * *

Каллех тытмарĕ сăмахне тӳре,
Суйи-ултавĕ çапăнать хӳрен.
Çӳлти Атте явап тыттарнă чух
Мĕн каласа вăл тухĕ-ши тӳрре?

*   *   *

Тӳррипе каласан, эпир пурте ухмах,
Пач та ан иккӗленӗр: эп хам та ҫавах.
Анчах ҫын умӗнче ӗмӗрех тăрăшатпăр
Хамăртан курăнасшăн кăштах ăслăрах.

*   *   *

Ах, асаттем, ытла та хӳхӗм ӗҫлӗ
Сан аллунти ҫак кукăр пуҫлă шӗшлӗ.
Анчах, тепре пăхсан, пур япала та
Ҫак ҫӗр ҫинче ик енлӗ те ик вӗҫлӗ.

*   *   *

Эй, хуҫа, эп укҫаллă та вăйлă тесе
Ан ҫӳре каппайса, ан ҫӳре иртӗхсе.
Шута ил: вӗрен пек тăсăлса выртакан
Ҫӗлене ҫисе янă вăрман кăткисем.

* * *

Этем чунне илет укçапала эрех,
Çынни тăрса юлать çавна сисмесĕрех.
Укçа сумне мухтать, мухтать вăл эрехе,
Ав халь те чавтарать шерпет патне ирех.

* * *

Çурхи кун варринче тĕксĕмленчĕ мехел...
Ав кăçал та юман тăваймарĕ йĕкел.
Уй та, хир те пиртен тӳртĕнле çаврăнсассăн,
Эй, этем, шур пӳртре пушанать-çке сĕтел.

* * *

Шăпчăксен сассипе çуралать çĕнĕ кун.
Шухăш витĕр таçта тинкерет кӳтнĕ чун.
Эс масар еннелле тепĕр утăм тăватăн.
«Асăрхан», — тет сана Турă çырнă саккун.

* * *

Арманта икĕ чул хушшипе юхнăн çăнăх
Сăмахпа вирхĕнет пирĕнтен хамăр чăнлăх.
Мĕн килет каялла? Çын суйи те ултавĕ,
Хурăнташăм, çакна ачаран эсĕ хăнăх.

* * *

Эй, тăванăм! Мана тарăхса çӳриччен
Ху çине пăхса ил хĕвел ӳкнĕ енчен:
Эс ялан чул шыратăн вăйна кăтартма,
Эпĕ — юрă çыратăп юлташлăх çинчен.

* * *

Кивелнĕ уйăх катăлса çитсен
Тулма пуçлать пĕр пеккĕн каçсерен.
Ытлах ан татăл, каякан юлташăм,
Тен, хамăр та килетпĕр çĕнĕрен?

* * *

Телейлĕ эп, туссем, пурнас мехелĕмпе.
Кун-çул тени паха вĕçленнипе.
Каяссинчен хăрас килмест пĕрре те —
Унта эп пĕрлешеп несĕлĕмпе.

* * *

Çак сăмаха ăнланăр та ĕненĕр:
Аннемĕрсем пурнаççĕ икĕ ĕмĕр.
Ак тĕслĕх: çылăха кĕрем кăна, —
Тĕлĕкĕмре куçран пăхать аннемĕр.

* * *

Çĕр тĕрлĕ тĕс шыратпăр Нарспире,
Пĕр вĕçĕм пахалатпăр Сетнере.
Эй, Кĕçтенттин, вун çиччĕри яш каччă,
Мĕнле ыйту эс патăн-ши пире?

* * *

Кам пыл чӗлхеллӗ? Петӗр Хусанкай.
Кам шăрт чӗлхеллӗ? Вăл — Якку Ухсай.
Пылпа шăрта мӗнле пӗрлештерем-ши
Тесе асапланатчӗ тек Малкай.

* * *

Капăрланать чечекӗм — кипарис.
Техӗмленсе пиҫет сӗтеклӗ рис.
Сипетлӗ пул, кӗрнеклӗ пул, сӗтелӗм, —
Кӗҫех килсе ҫитет Ренат Харис.

* * *

Уйваррипе утса пырать Тукташ,
Унпа пӗрлех — Урташ, Канаш, Айташ...
Хастар йăхташ, тен, хыҫалта та пур-тăр?
Пур, пур: Кăмаш чӗкеҫӗ Саманташ.

* * *

Берлин. Аэропорт. Ик хăмăр куç
Пуплеççĕ чăвашла: «Тӳпемĕр, алăк уç!»
Хĕпĕртесе таятăп пуçăма:
Трак енсемех иккен Таруçпала Маруç.

* * *

Çич енчен хапсăнаççĕ, Раççейĕм, сана,
Сан çĕрай пурлăхне, сан шывна, вăрманна...
Ярханах кĕпепе йӳле янă пиншак,
Эс кăна чăн-чăн хак параймастăн хăвна.

* * *

Патшалăх Канашне лекес текен
Çынсем те çĕр çинчисемех иккен:
Малаш пирки шутланипе пĕрлех
Элек сараççĕ пĕр-пĕрин çинчен.

* * *

Тухăç вăл — Ташкент та Тегеран,
Аякри океансем таран.
Лондонсем енчен пăхас пулсассăн —
Тухăç пуçланать вăл Чăвашран.

* * *

Чăн чăвашла ĕнернĕ хĕлĕхе
Çӳлти Аттемĕр кĕртнĕçем хĕлхем
Каланă: «Ырă халăх, пил сана,
Çу пек çемçе чĕлхе — ĕмĕрлĕхе».

* * *

Чĕремĕрте вылять çĕр пин сăмах,
Ăш пиллĕн хывăнать çĕр пин юмах.
Ыр сăмахран ыр шухăш çуралуçăн
Эрешленеççĕ сурпанпа масмак.

* * *

Çĕн курăк шăтрĕ. Ешерет тавра.
Малаш сĕткенĕ вăрманта, уйра.
Ак ĕнтĕ эп те, утмăлри ача,
Тăвап шăхличĕ çамрăк çăкаран.

* * *

Кун-çул тени кăткăслăхран тăрать.
Е çывхарать вăл, е инçе тарать.
Шутла: этем уй хапхинчен тухмасăр,
Пӳртрех çул çухатма та пултарать.

* * *

Арçын. Ун çумĕнче саспах йĕрет хĕрарăм.
Çавна курсан эп хама хам каларăм:
«Хӳтлĕхсĕр чун çапла хӳхлет пулсассăн
Эс ху кĕçех макăрасса ку ахрăм».

* * *

Килетĕн. Шаккамасăрах кĕрен.
Эп хирĕç маррине аван пĕлен.
Çăра тени сан алăкун та çук-ха,
Анчах... ăна сыхлать хура çĕлен.

* * *

Санпа ирех кăшт калаçам, çăлкуçăм,
Ахальлĕн ĕç тытсан та çуккă уçăм.
Çак шăнкăр-шăнкăрти сасса илтсен
Вĕр çĕн хевте илет пек куçăм-пуçăм.

* * *

Хĕвел-сăмах тупас тесе, тĕнче,
Çӳрерĕм çичĕ тинĕс леш енче.
Пĕлетĕр-и, туссем, ăçта вăл пулнă?
Вăл пулнă хамăр ял урамĕнче.

*   *   *

Шур кĕпепе мучи, костюмпала,
Çăп-çăмăл та çемçе пушмакпала.
Каллех ял ĕçĕпеваскать пуль тейĕн,
Анчах васкать вăл... юлашки çула.

*   *   *

Пикеçĕм, ак ана çинчи сар тулă.
Çут кӳллĕмре ишет асамлă пулă.
Тата мана мĕн кирлĕ тетĕн-и?
Мĕскер кирли те çакă çеç — йăл кулă.

*   *   *

Çĕн шуçăм евĕр килчĕ паллашу.
Шутларăм: чуншăн çитрĕ шайлашу.
Анчах тăват енчен çилсем çĕкленчĕç,
Таçтан сасартăк тухрĕ тавлашу...

* * *

Чĕлхе тесессĕн, тусăм та юлташăм,
Сиртен çакна асра тытма ыйтасшăн:
Тĕнчен сăмахлăх йывăççи пĕрре.
Тураттисем — пин-пин. Çӳлти — чăвашăн.

* * *

Курпун çынна тӳрлетĕ тетчĕç вилĕм.
Хăш самантра ылмашрĕ-ши çак витĕм?
Кур халĕ эсĕ: çамрăк ачана
Курпунлатать çич тĕрлĕ сĕрĕм-тĕтĕм.

* * *

Ачалăху тăрать сан ыйтуран.
Яш чух эс кăшкăру палли çыран.
Анчах чуну çӳл тӳпере тухсан та
Эс пăнчуна масар çинчех лартан.

* * *

Кĕтесшĕн мар мана тек тухăç та,
Чĕнесшĕн мар мана тек анăç та...
Мĕнле синкер хуплать малашлăха?
Яш кунăмсем, ăçта эсир, ăçта?

* * *

Туссем çинчен илтеп хитре хыпар.
Çĕн кун, эс вĕсене пыл çеç хыптар.
Ман тилхепе тесен — ăна хытар,
Поэзири çăмăллăхран хăтар.

* * *

Тюльпан пит хăвăрт çурăлчĕ,
Анчах эрне çеç пурăнчĕ.
Ансат çуралнă юррăмпа
Мана кĕтет, тен, çав шăпа?

* * *

Сĕретчĕ çумăр тунсăх хĕлĕхне.
Каçа пăхмарĕ, тухрĕ ав ăш çил.
Вара улăштарса регистрне
Пуçларĕ çумăр Мексика ташши.

* * *

Чи çӳлти сар мăйăра татасшăн
Эс лăскатăн шĕшкĕ вуллине.
Йывăçа ан тăпăлтар, тархасшăн,
Тат ав умăнти курланкине.

* * *

«Ан тив, тархасшăн», — тенĕ сехетре
Хĕрне чарусăр ыталатчĕ каччă.
«Чупту», — тет хĕр халь çепĕççĕн, хитрен,
Каччи хăть ăшшăн çаврăнса пăхасчĕ.

* * *

Сăмахпа çут çăлтăр эсĕ татрăн,
Ярăнса çӳрерĕн тӳпере.
Умăнти шĕл мăкăне курмарăн,
Параймарăн пуçтарса хĕре.

* * *

Чуну усаллăн урнине пĕлсех
Пăхать хăюллăн тĕкĕр сан çине.
Ăна юри çапса çĕмĕрнипех
Эс хупаян-ши Тĕрĕслĕх куçне?

* * *

Эй, арçынсем! Шăрантăр ярăм-ярăм
Вăй-халăмăр кун-çул вучахĕнче,
Вара кăштах каçарăнĕ, тен, парăм
Тĕнче тытан хĕрарăм умĕнче.

* * *

Альтук аппа, чуну тек ан амантăр
Ун хыççăн çӳресе пашка-пашка.
Чĕре кăшкăрăвне ăçтан ăнлантăр
Ыйту палли пек кукăр упăшка?

* * *

Тăшман йăпăлтатса пыл сĕнтĕр,
Вăл — наркăмăш! Ан тыт алла!
Тукмак тем чухлĕ çитерсен те
Пăхать ялан вăрманалла.

* * *

Пĕр усалпа эп çăмăл кĕрешетĕп,
Тепри вара — халтан ярать хама.
Пӳрт этеме темрен те хӳтĕлет те —
Вутра çунса каять хăй туххăмах.

* * *

Çапла пуçна усса ларни аван-и,
Кирлех-и вак-тĕвекшĕн кулянма?
Эпир çуралнă кунхинех, тăванăм,
Мĕн пӳрнине пуçлатпăр çухатма.

* * *

Юлташ çуккишĕн çынсене кӳрентĕн
Куну-çулу хиврелнĕ тапхăрта.
Ху вĕсене сума суман пĕрре те
Ни çирĕмре, ни хĕрĕх тăххăрта.

* * *

Çĕрĕн икĕ полюс — Çурçĕр, Кăнтăр,
Ик енче те пăр кĕтет сана.
Ырăпа усал та çав майлах-тăр:
Ӳкереççĕ шутарса çынна.

* * *

Çапах та пурнăç сцена мар çав,
Пин хут вăл анлăрах унтан.
Спектакльте эс пулăн маршал,
Тухсан — çын кӳллинче путан.

* * *

Начар калатăн эс тесе
Пĕр критик артиста хурларĕ.
Анчах ун гобойне илсе
Хăй выляса кăтартаймарĕ.

* * *

Пин çул çĕрте упраннă чĕр хăмла
Тухать те — хуçине тĕлех пулать:
— Аван-и, — тет вăл, — пиллĕхлĕ сăвар?
Сан ятупа яратăп çĕн тымар.

* * *

Сана илем те панă çут çанталăк,
Пуçу та пур ик хулпуççи çинче.
Анчах мĕн-ма эс тăсайман-ши алă
Сăпайлăхне валеçнĕ чух тĕнче?

* * *

Тĕллевĕсем пĕр евĕр ик юлташăн:
Вĕсем ларса уяв пĕкки çине
Ян-ян шăнкрав пулса шăнкăртатасшăн,
Анчах та хăшĕ туртĕ кӳмине?

* * *

Куратăр-и уйпа утакана?
Вăл Çеçпĕл, Çĕнĕ Кунăн утаманĕ.
Вăл ылтăн вăрлăх акакан ана
Уй мар иккен, истори ал тупанĕ.

* * *

Ларать Степан Максимов читлёхре.
Йĕрет хăй айăпне пĕлмен чĕре.
Йĕплĕ пралук картин ноти ăна
Халь-халь çырас элегин туйăнать.

* * *

Караç, кахал пулин те, тăрăшсах
Касса антарчĕ çӳллĕ чăрăша.
— Караç, ку йывăçран эс мĕн тăвасшăн?
— Ун вуллинчи ункă шутне шутласшăн...

* * *

Сана çавран курнан тăваткăла
Эп ун чухне çавра темерĕм.
Каярахпа вара çавна пула
Виç çуллăх хыпрăм йӳçĕ эрĕм.

* * *

Ма чечек çурăлать? Пурăнас килнипе.
Ма чечек тăкăнать? Пурăнас килнипе.
Ма вăрри ун пулать? Пурăнас килнипе.
Ма çĕре акăнать? Пурăнас килнипе.

* * *

Анкарти хыçĕнче — лаша пуçĕн шăмми.
Мĕн шутлать-ши сар каччă ним хускалми?
Вăл пĕлет-ши: аслашшĕ яш чух çак яла
Пике лартса килнĕ шăп çак утпала?

* * *

Мĕскер тени усал, мĕскер — тĕсел,
Ан тив, калатăр тӳпери хĕвел.
Вăл ачашлать магноли çеçкине те,
Тарăн варти хаяр тал пиçене те.

* * *

Кама кăвак çутлах эп вăратап? Хама.
Кама куç уçсанах эп ĕç хушап? Хама.
Йывăртарах çĕклем кама сунап? Хама.
Юлташăм такăнсан кама ятлап? Хама.

* * *

Çĕрле. Джелалабад таврашĕнче
Яш ĕмĕре душман шĕнкренĕ татрĕ.
Ылханлă пулăм пĕтĕм çĕр çинче
Мĕнпур салтакăн амăшне вăратрĕ.

* * *

— Аçу çинчен парсам-и каласа?
— Çуклăх пулчĕ манăн аттеçĕм.
— Аннӳ çинчен парсам-и каласа?
— Выçлăх пулчĕ манăн аннеçĕм.

* * *

Ушахлăхра шур кăрăç пуçтараттăм.
Сахал тесе тепĕр çĕре уттартăм.
Унта çатанăма кăмпа лекмерĕ,
Ушахлăха каяс — хăю çитмерĕ.

* * *

Ак укăлча... Салам, сар кайăк сачĕ,
Тесе пырса кĕреп тăван яла.
Кунта эп яшлăха тара парсаччĕ,
Паян... мĕнле илем-ши каялла?

* * *

Ик Улăп пек ыталашаççĕ мар-и
Çап-çутă çиçĕмпе лаштра юман?
Пĕрин çĕрте, теприн çӳлте тымарĕ,
Те ют вĕсем, те ытарми тăван?

* * *

Чăр-чăр пăхса лараççĕ куçăмран
Çылăхăмсем — кашта çинчи чăхсем.
Ан кайăр. Ларăрах. Эсир кайсан
Килсе кĕме пултарĕç çĕннисем.

* * *

Хĕр чухне эс именчĕкчĕ, çепĕç, чечен,
Халĕ чăрсăр арçын та хăрать чĕлхӳнтен.
Мĕн тăвас, тепĕр чух пахчари розăран
Пулать те ларать шĕвĕр йĕплĕ шăлан.

* * *

Каска çырана тухса выртнă шывран.
Пăру пуçĕ пек ун ик пуçĕ мăкла.
Ах, пурнăç, пире эс пĕр шелсĕр хăйран:
Мĕлке пекчĕ çӳçĕм, халь юлтăм шакла.

* * *

Çĕршер патвар алпа йăтса туссем
Сана кăларчĕç асамат кĕперĕ витĕр.
Камсемччĕ-ха, çапах, çĕклекенсем?
Вĕсем сана халь кирлĕ мар пĕри те.

* * *

Уй куçлă та вăрман хăлхаллă,
Тӳпе йăлтах курса тăрать.
Çапах, туссем, мĕнле-ха, калăр,
Салтак хыпарсăр çухалать?

* * *

Çакна юри ятарлăн тĕсесен,
Тăванăм, эсĕ ху та тĕлĕнен:
Çĕр чăмăрне пăвать хура çĕлен
Ниçтан та мар, экватор тĕлĕнчен.

* * *

Вараксенчи шыв шăнкăравĕ евĕр
Шăнкăртатса иртсессĕн хĕл ĕмри
Çӳлти хур кайăк сассинчен, туссемĕр,
Тăвас килет ман суха пуç тимри.

* * *

Кĕр мăнтăрĕ — çĕн çăкăр та кукар,
Курак кĕтĕвĕсем вĕçеççĕ йăвă.
Мухтав Турра: эп хам та пушă мар, —
Пуçра ларать тăват йĕркеллĕ сăвă.

* * *

Сăпка та тупăк... «Пĕр пекех-çке, — тетпĕр, —
Тĕллевĕсем те пĕр пекех таса.
Çак çеç: пĕринпеле кĕтсе илетпĕр,
Тепринпеле яратпăр ăсатса».

* * *

Уран чавать хура элчеллĕ халăх,
Çĕн çĕмĕрен — ядерçăсен ăс-халĕ...
Çапла, малтан этем тăвать усаллăх,
Унтан вара — тăр-тăр чĕтрет тавралăх.

* * *

Ылтăнĕсем каяççĕ ку енчен,
Кĕмĕлĕсем куçаççĕ леш енчен...
Раççей анне таса Тур Амăш евĕр
Пăхса ларать калпакĕ айĕнчен.

* * *

Эс йыттине тахçантанпах пĕлетпĕр.
Сана хӳре лартса парас пулсан
Эс хӳрӳне хурал Кампурĕ евĕр
Вылятнине тураттăмăр аван.

* * *

Умра хăлаçланать шуйттан арманĕ,
Умра çуйăхашать эсрел вăрманĕ...
Тен, манăн каялла çаврăнмалла?
Çук, çук, салтак! Утатпăр малаллах!

* * *

Кĕрлет Хусан пасарĕнчи хупах.
Туссем мана тыттарчĕç попугай.
Çĕн хуçана тĕпчевлĕн пăхнă май
Каларĕ читлĕх кайăкĕ: «Ухмах».

* * *

Йăви патне вĕçсе пырать сар кайăк.
Çăвар карса виç чĕп кĕтет ăна.
Пурне те ыр тусан — пулатчĕ лайăх,
Анчах та кăпшанки — пĕрре кăна.

*   *   *

Карчăка çĕр тултарнă ятпа саламлаççĕ,
Çĕн кĕпе тыттарса ăшă тутăр çыхаççĕ...
Ах, хула тӳрисем... Кинеми хăйсенчен
Чăвашла пуплессе кĕтнине ăнланмаççĕ.

*   *   *

Турри умри çулсем çине çу сарнă,
Шуйттанĕ çав пиллĕхсене çунтарнă...
Çапла вун икĕ хырăм пăрахса
Вун икĕ çын вĕлертĕн эс, Сюзанна.

*   *   *

Куллен кĕскелекен утăмпала
Çаплах тапаланатăп малалла.
Ту çинелле эп улăхап пуль теттĕм,
Иккен, анатăп эп аналла.

* * *

Ухă йĕппи умран шик шăхăрса вĕçтерчĕ,
Вĕри шĕнкрен куçра хĕм-çиçĕмне çиçтерчĕ.
Хаяр сăмах вара, мана шыранăскер,
Тĕл пулчĕ те — тӳрех çапса ӳкерчĕ.

* * *

Элле, тăванăмсем, пĕлместĕр-и,
Çĕрсенĕн те пурах иккен чĕри.
Анар та ак сăпай çăлкуç патне
Сăнар: тасан тапать вăл мĕн тери!

* * *

Каларĕ шур сухал: «Чĕре — çăмха,
Ăçта вăл çитĕ — пĕлеймест çамка».
Чăнах, шăпам чĕре çине сăмахсăр
Хăварчĕ çаптарса вĕри тăмха.

* * *

Шевле сапать хӗвеллӗ ҫур аки.
Мӗн пултӑр ҫак ыр вӑхӑтран пахи?
Анчах, пикеҫӗм, шутласа пӑхар-ха:
Ҫав ҫуркуннех-ши ку е урӑххи?

* * *

Кӑвак куҫна ялан курса умра
Кӑвак чечек ӳстертӗм пахчара.
Анчах чечекӗм усӑнчӗ сасартӑк
Сана эп уссӑр кӗтнӗ хушӑра.

* * *

Сӑвар патшийӗм, Улӑп Илитверӗм,
Сан йыхравна эп ывӑл пек итлерӗм.
Анчах вун пилӗк ӗмӗр сӗмӗ урлӑ
Мана илтен-ши эсӗ, элтеперӗм?

* * *

Тухья, хулкан... Умра — ама сăнсем,
Куçăрсенче — сӳнми кăвар хĕлхем.
Чăваш малашĕн никĕсне хываççĕ
Çиçкен хĕç тытнă Сăкăт хĕрĕсем.

* * *

Вăрман сĕтекĕнчен йӳç наркăмăш пухса
Сивлек хура çĕлен çӳрет шуса.
Шăпах çак йĕркепе пурнатăн эс те
Ыр хыпартан суя сăмах туса.

* * *

Хăйне ăшри йăл куллипе савса
Паян çӳлте ларать вăл каппайса.
Шутла-ха эс: ăс мар, чĕре те мар,
Ун çул-йĕрне уçса пырать — чавса.

* * *

Тенкĕ тесе пăхатпăр тухăҫа,
Евро тесе пăхатпăр анăҫа.
Эй, самана! Ҫӳлте шăван хĕвел те
Куҫа кутемĕн курăнать укҫан.

* * *

Мал ен туртăмĕсен йыхравĕпе
Кихот вăй виҫнĕ ҫил арманĕпе.
Атейҫĕ Петĕр, Ирчемес ачи,
Тен, кăлăх эс кĕрешрĕн чиркӳпе?

* * *

Ĕмĕрĕмри пин ҫывăхлăх, инҫетлĕх,
Сире пĕлсе шайлаштарать виҫелĕх:
Чи юлашки ҫула каяс чухне
Эсир пулатăр тупăкри пуҫелĕк.

* * *

Ял патнелле хываççĕ такăр çул,
Никĕсĕнче — вĕтетнĕ шакăр чул.
Чул витĕр, асфальт витĕр шăнăр куракĕ
Шăтса йыхрав ярать: «Çын, ман пек пул!»

* * *

Амăшне Çӳлти Атте пӳрнĕ ĕмĕре
Татрĕ нĕрсĕрлĕхĕпе ывăл-чĕмере.
Каярах вара ачаш ывăлăн пуçне
Çирĕç йăрă йĕкĕтсем сивĕ тĕрмере.

* * *

Вăранса тухаймарĕ Литӳç — пуйăс кайрĕ.
Шăпчăкне тытаймарĕ Литӳç — пуйăс кайрĕ.
Çамрăк чух пуçĕнче шухăшсем те пур пекчĕ,
Шурă пӳрт лартаймарĕ Литӳç — пуйăс кайрĕ.

* * *

Пуç тайрăм эпĕ ватă юмана.
Ăнланчĕ те каларĕ вăл мана:
— Йăхăмăра, тархасшăн, ан пĕтерĕр,
Кĕçех юлатпăр герб çинче кăна.

* * *

Бамбук, чинара, эвкалипт, платан
Вăрманĕнче йăмра шырап ялан.
Темскер çитмест çĕр çынлă йыш çинче
Чуна уçма чăваш тĕл пулмасан.

* * *

Чернигов ку енче — çерем хăяк.
Шыв хĕрринче чăштăртатать хăях.
Çав вырăнта туйи çине таяннă —
Чăвашалла пăхса тăрать Репьях.

*   *   *

Сирĕн енче калаççĕ «пĕрехмай»,
Пирте ун вырăнне çӳрет «песмай».
Çав сăмаха кашни илтмессерен
Сана аса илетĕп эп, Исмай.

*   *   *

Паян пĕр каччăпа кĕретĕн тĕм хыçне,
Ыран эс çавăран теприн пуçне...
Тур Амăшĕ çакна йăлтах курса
Вăтаннипе часрах илет куçне.

*   *   *

Малтан — ӳпле, унтан — хивре чăлан,
Халь ак кермен çути чĕнет туран...
Ах, каттăршнай, çав ĕмĕтри арçын
Ялан кăшт лайăхрах упăшкаран.

*   *   *

Хитре сӑмах пур пирӗн — сарана.
Аван сӑмах пур пирӗн — ярана.
Пӗри — чечек, тепри — йӗнерҫӗ пускӑчӗ...
Кӗрейӗҫ-ши вӗсем ҫӗн йӑлана?

*   *   *

Никам та калаймасть пуль ахӑртнех:
Пӗрремӗш хӑшӗ килнӗ ҫӗр ҫине?
Шӑпи пӗрех ырӑпала усалӑн:
Вӗсем ялан шыраҫҫӗ пӗр-пӗрне.

*   *   *

Тӑванӑм, мӗн пуҫна усса ларан?
Ут сывлӑмлӑ уй урлӑ ҫаруран.
Хӑвах туятӑн сиплӗх туянсассӑн:
Кирек хӑш чир те хӑй хӑрать санран.

*   *   *

Тӳпемӗр пехилленӗ Шупашкар,
Пулсамччӗ эс чӑн чӑвашла кӑшкар:
Тулай енче пиншер чӗлхе вылятӑр,
Пире эс хамӑрлах шухӑшлаттар.

*   *   *

Инке чӗлхи — шӑрҫа пекех япшар,
Шывран тухса итлет ӑна акшар.
Хӑмла ҫӳлте ишсе ҫӳрет пулсассӑн
Чул ҫавракин мӗн-ма хускалас мар?

*   *   *

Сӗтел ҫинчи шап-шурӑ хризантема
Хӑй ячӗпе мана сӗнет ҫӗн тема:
— Ҫак кӗнекӳ чипер пиҫсе ҫитсессӗн
Пуҫла ҫӗн ярӑм — «Юрату сӗвемӗ».

* * *

Пике хавасчĕ юрă пуçарма,
Шур акăш евĕр çепĕç ташлама.
Никам та ăнланмасть: паян мĕскершĕн
Вăл шикленет алтарь умне тăма.

* * *

Талант — илем çăлкуçĕ, ырлăх,
Малаш йыхравĕ, çураçулăх.
Ăна укçан илме тăни, —
Туссемĕр, чи хăрушă çылăх.

* * *

Иккĕленме пултарăп-и:
Халь чăвашла хайлав пин-пин.
Çав сумлă пин те пин çинче —
Чăн чăвашли çапах — «Нарспи».

* * *

Пуҫа сурпан пек яваларĕ Сурăм.
Те ăрăм лекрĕ шăпама, те сурăм?
Пикем, ятна ҫак шыв хĕрне анса
Ҫич ҫĕр те ҫитмĕл ҫич хутчен эп сурăм.

* * *

Юр кайрĕ пахчара, пикеҫĕм, кур,
Пур ĕшпĕл курăк, ĕшпĕл кайăк пур,
Пĕри ҫеҫке ҫурать, тепри юрлать, —
Пире темскер каласшăн мар-и ҫур?

* * *

Ан мăнаҫлан, сар хĕр, хитрӳпелен,
Сăна пăхмасть сăхас текен ҫĕлен,
Шута илмест ăна акар йытти те, —
Ан мăнаҫлан, сар хĕр, хитрӳпелен.

* * *

Синкерлӗхре чуну çухатнăçем хăтне
Васкарăн эсӗ малтанхи юратăву патне.
Йăл кулчӗ вăл... Кил терӗ...
Савăннă пек пулчӗ...
Анчах... хускатаймарӗ яшлăх тахатне...

* * *

Кун-и, çӗр-и — пӗлмест юрату,
Хӗл-и, çу-и — пӗлмест юрату.
Çун, шăран, ӗмӗр ялкăш, çӗнтер! —
Çакна çеç ăнланать юрату.

* * *

Итле: Нарспипеле Сетнер юрлаççӗ,
Ромеопа Джульетта савăнаççӗ.
Юратупа тӗнче уçакансем
Чăн юрату ытамӗнче пурнаççӗ.

*   *   *

Хура тĕсе ан чĕн-ха шурăпа,
Хуйхăпала шуралнă шур аппа.
Çутта хуплас самантусем ахаль те
Килесшĕн улт çĕр утмăл улттăпа.

*   *   *

Хĕвел ăшши... Тăман лапки-лапки...
Сăваплă несĕлсен çемçе сăпки...
Çак Атăл хĕрринчех, тăванăмсем,
Çавра тĕнчен чăвашлăх сапаки.

*   *   *

Çут хĕвел çутине хăтланасшăн сирме
Славянла та тĕрме, тĕрĕкле те тĕрме.
Ах, тĕнче майĕпен çуталса пынăçемĕн
Тимĕр читлĕх çуртне çук-шим май пĕтерме?

* * *

Пӳлер енчен килсессĕн аслă тăрăн
Калană: «Çак ял ячĕ пулĕ Тăрăн».
Çав çарăça пуç тайнă несĕлсемĕр
Лартаççĕ пĕрре мар, вун çичĕ Тăрăн.

* * *

Çитерĕп-и аттемĕр ĕмĕтне,
Тытайăп-и Ĕпхӳ çил çунатне
Тесе çăлтăр хушка ута утлантăм,
Анчах çаклантăм хĕскĕч хĕсметне.

* * *

Пуш уйăх варри. Шăпчăк çук ун чухне.
Эп яла, сан патна, хыпăнуçăн, анне,
Кăсăя юррисем тĕнчене пĕлтеретчĕç
Паянтан эп хăр тăлăх юлнин хыпарне.

* * *

Эй, кĕмĕл киккириклĕ сар автан,
Çӳл тӳпене пăхсах-çке авăтан.
Тен, кăйкăрсен шайне эс улăхасшăн?
Çырлах, тăван, мĕн пуррипе... лăплан...

* * *

Ах, ашшĕ, амăш... Хупласан та хурлăх
Ачи-пăчи валли пуçтарчĕ пурлăх.
Лешсем сисмерĕç... Кайрĕç иртĕнсе.
Мĕн пулчĕ вĕсене? Ыртарчĕ ырлăх.

* * *

Пин-пин шăпаллă вĕçсĕр тӳпере
Ларать пурне те куракан Тӳре.
Хăш пӳрнипе тĕллет çӳлти çыруçă —
Шăп çав элчел лекет, туссем, пире.

* * *

Ирпе кăна çисеччĕ çĕр улмипе уйран,
Кăнтăрлахи каллех — улмапала уйран.
Ăçта кайса кĕрес кунти тăхлачă
Каçхи татах лартсан улмапала уйран?

* * *

Юлташăма каларăм: «Ырă кун!»
Мана вăл евитлерĕ: «Урă кун!»
Тĕлĕнмелле: эп урă мар çӳрес
Хăрушлăх паллисем пурах-ши ун?

* * *

— Аван-и? — тет мана анкартинчи хăмла.
Чăн чăвашла сăмахĕпе çĕклет вăл кăмăла.
Çĕн ĕмĕрсем чĕлхемĕре тек хĕсĕрлес пулсан та
Каш-каш хăмламăр пурпĕр кашлĕ хамăрла.

* * *

Этем йăхне аталанма кирлех-и, тен, усал?
Эпир унпа тытăçмасан хушăнаймасть вăй-хал.
Ан вĕртĕр çил, ан çутăр юр,
çул пултăр тикĕс, такăр —
Ĕçлемесен, кĕрешмесен епле йăл илтĕр ал?

* * *

Эй, хĕрĕх чалăш хĕрлĕ тĕслĕ ту,
Çӳлтен çӳле чĕнет иккен сан авалхи яту.
Тавралăха курам тесе хăпарасса хăпартăм,
Аялалла мĕнле анас? Хам тупрăм çĕн ыйту.

* * *

Апат çиеççĕ ырăях çынсем,
Йăлтăртатаççĕ çуллă тутисем.
Вĕсен кĕрекинче çийи-çими ларатăп
Эп, ку иртĕхĕве ăнланайман этем.

* * *

Тăван ялти çĕн ӳсĕм кусĕнче —
Суту-илӳллĕ паянхи тĕнче.
Ашшĕсемпе амăшĕсем выртаççĕ
Виç ял масарĕн Танăш ретĕнче.

* * *

Тăвусăн виç Альбина кĕр сăри
Паян сана асилтĕм эп, Сарри.
Мĕнпур хастар Альбина хушшинче
Санăн юрру, тен, чи çылăхсăрри?

* * *

Лартать юлташ черетлĕ черккине.
Хăех пуçлать вăл хăйĕн юррине.
Шăп çакăнтан туйса илетĕп эпĕ
Юлташ хăй виçине тултарнине.

* * *

Каллех, каллех поэт ячĕпеле
Ентешĕмсем патне ман çитмелле.
Анчах... тӳпемĕр шайĕнчи ята
Мĕн сăмахпа çирĕплетме пĕлем?

* * *

Йăлтăртатать çӳлти тӳпе ĕнчи,
Этемлĕх ăсĕн, туйăмĕн виçи.
Итлер, туссем, мĕскер пире каласшăн
Поэзин ĕмĕр çиçекен тĕнчи?

* * *

Дубултăра çил тухрĕ. Хыр пулчĕ тăчĕ Нерис,
Унтан хыр чĕлхипе калаçрĕ Райнис.
Хумсем ăмăртмалла ал çупнăçемĕн
Вуларĕç сăвă Вациетис, Балтквис.

* * *

Ан ыткăн тинĕс еннелле, лашам, —
Пире кĕтет-им Моисей патша?
Умри çула часрах улăштарар та
Çитсе ӳкер пехиллĕ Чăвашах.

* * *

Эс, ăвăс, пин манитлă, пĕр евитлĕ,
Сан юрруна вăрман кĕлли пек итлĕн.
Якур, чĕлхӳ пĕрре кăна пулсан та
Сăмахусем — кашни ик-виçĕ питлĕ.

* * *

Каллех майне тăсать ав хура ту...
Тен, унăн тĕп тĕллевĕ — хурату?
Çапах, тем пек пахматсăр талайпа та,
Кун çутине хуплаймĕ хăрату.

*   *   *

Вăрçу... Хӳтĕленни е тапăнни?
Ăçта ăна тĕп-тĕрĕс хак пани?
Виçĕ тӳре виç тĕрлĕ шухăшлать тĕк —
Пурах-ши чăнлăхне шыраканни?

*   *   *

Ял-йыш! Уничерен пыл çулĕпе ăсатрăн,
Çу çулĕпе киле килме пил патăн.
Лере инкекĕ те, нуши те пулчĕç,
Эс вĕсене çĕнсе пыма вăй ятăн.

*   *   *

Лартать те вĕлле хурчĕ сăннине —
Туйса çӳретĕн эс ыратнине.
Çапла пĕр çын чунра тымар ярать те —
Кĕтрет пек эс упратăн ун сăнне.

* * *

Шур сухалсем ай шухăш шухăшлаççĕ,
Шутла-шутла пĕрне-пĕри калаççĕ:
— Атăл атте ик çыранне çапсан та
Çыранĕсем çав вырăнтах юлаççĕ.

* * *

Асилтерсе юман кӳлепине
Çĕр чăмăрĕ тек çăмхалать çулне.
Кашни этем, пурнăç пурнап тесе,
Касать хăй ларакан турат кăкне.

* * *

Пуян е чухăн, ăслă е ухмах, —
Çĕр кашнинех калать пĕр пек сăмах:
— Ак алăк уçрăм, ырă çыннăм, кĕр,
Манран эс пулнă, пулăн манăнах.

* * *

Кĕр мăнтăрне ылтăнласа укăлчари сар хурăн
Çĕр çичĕ мăнукне пуçтарчĕ Ерентей маттуррăн.
Ыйтаç мăнукĕсем:
«Эй, асатте, ĕмĕрӳнте мĕн турăн?»
Аслашшĕ евитлет: «Мăйăр катса тĕш турăм».

* * *

Айпи, çиçместĕн эсĕ хĕвелле,
Юрру юхмасть асамлă кĕвĕлле.
Анчах калаçнине итленĕçемĕн
Чун варринче çиçме пуçлать шевле.

* * *

Аваллăхсем шăваççĕ анăça,
Людовиксем тухаççĕ манăça.
Поэт сăмахĕ, çĕрлехи кăвайт пек,
Сирет хăюллăн сĕм хура каçа.



## МĔСКЕР ТЕНИ УСАЛ, МĔСКЕР ТĔСЕЛ

* * *

Эй, Шетмĕ Михали! Маттур этем,
Çул хыттине эс çухатмарăн тем:
Сăввусене сулахайпа çырсан та
Ялан калатăн сылтăм шухăшсем.

* * *

Хумне пĕр тикĕс авăсса
Выртать мăн тинĕс калаçса:
«Чипер ăса эп çул паратăп,
Памастăп çул тӳнтер ăса».

* * *

Çӳлте вĕçет пĕр ушкăн кайăк хур,
Умра — сăр кирпĕчлĕ тĕрме-кантур.
Шалтан тĕсет чĕр çиçĕм евĕр куç:
«Кунта сана валли те вырăн пур».

* * *

Сар кайӑк юрламан сад пахчине
Кӗрес килет-и санӑн ҫуркунне?
Поэтсенчен пӑрӑнакан хаҫат та
Пӗлтерӳпех ҫӗклеймӗ чӗрене.

* * *

«Кӗрен ҫеҫкӳпе илӗртен улмуҫҫи,
Телейлӗ-и эсӗ, кала, Униҫҫи?» —
«Телейлӗх пирки ҫакӑн пек ыйтиччен
Малтан каласамӑр: мӗнре ун виҫи?»

* * *

Расул Гамзатов, Хусанкай, Ухсай —
Утаҫҫӗ виҫҫӗн, Шупашкар, пуҫ тай.
Казбек лерен шур ҫӗлӗкне хывасшӑн
Виҫ улӑп чӑвашра тӗл пулнӑ май.

* * *

«Çилленнипе лартаймăн çил арманĕ, —
Час-час калатчĕ Сармантей Раманĕ. —
Кӳренĕве сирме пĕлсен кăна
Йăванмĕ, тӳнмĕ пурăнăç кăрманĕ».

* * *

Чӳкĕн вун улттăмĕш кунĕ.
Çеçпĕлпе вăранатăп.
Шăхасанăн та Теччĕн вĕçсе çаврăнатăп.
Евпатори, Кейӳ, Кашкăр Сăрчĕ... Унтан
Çĕнĕ юр çутипе килĕме таврăнатăп.

* * *

Миçе çул кĕтрĕ вăл çурт хута каясса!
Раштав умĕн вырнаçрĕ унта савăнса.
Иçмасса, кӳршĕме тепĕр виçĕ кунтан
Килĕнчен тупăкпа илсе тухрĕç йăтса.

*   *   *

Ир тăрап сăвă шухăшĕпе,
Каç выртап сăвă шухăшĕпе.
Сăвăç-ши, сăвăç мар-ши тесе
Тек шутлап хам çинчен тăршшĕпех.

*   *   *

Хăш чух чунра туятăп çĕкленӳ,
Хăш чух ав пусахласшăн кукленӳ.
Çӳç-пуç кăвакарсассăн та пулин
Иртме пĕлен-ши эс, иккĕленӳ?

*   *   *

Тахçан, Пăлхар патшалăхĕ пĕтсен,
Чăваш çĕн çĕрелле куçса килсен,
Çăлкуç тупать пĕр вăкăр вăрманта.
Апаш никĕсленет çав вырăнта.

* * *

Пĕр çын ĕçе кĕме пырсассăнах
Тӳресене калать çапла сăмах:
— Мана, атьсемĕр, пуканне çеç парăр,
Эп укçине тума пĕлеп хамах.

* * *

Тĕлĕнтерет шур сухалсен ăс-тăнлăхĕ!
Илер-ха ак пĕр çаврине кăна:
«Атьсем, ăçта пур çынлăх вăрлăхĕ —
Çав вырăнта пур çылăх вăрлăхĕ».

* * *

Ача чухне ярсаттăм эп Шетме
Хам ăсталанă пĕчĕкçĕ кимме.
Хăш тинĕсре çӳрет-ши вăл паян?
Май çук-ши халь ăна чĕнсе илме?

* * *

Чуна уçса ярас хĕвел-сăмахăм,
Эс çитĕн тунсăхланă урхамахăн
Тесе кĕтсе ларас-им ман сана?
Çук, хирĕçех тухап! Ăçта уртмахăм?

* * *

Чăн ывăл-и? Киле, çав урама
Инçетлĕх витĕр пĕлĕ уйăрма.
Çапла Кайсын Кулиев чăвашран
Хăй умĕнчи пек курнă Чегема.

* * *

Çавал енче хыçа юлать Ямаш,
Кăтартрĕ сăрлă автанне Кăмаш.
Укăлчара хапха уçать такам...
Кам пултăр ĕнтĕ? Хамăр Саманташ!

* * *

Те юмахне вӑлтмашкӑн хыпӑнатчӗ —
Ӗшне куккукӗ вӗҫсӗр авӑтатчӗ.
Тата мӗскер? Тата... ҫав ӗшнере
Ыталанса ларатчӗҫ хӗр те каччӑ.

* * *

Палюк кӗпе ҫӗлетрӗ пурҫӑнран.
Пӳрт лартрӗ. Ӗнтӗ кая мар ҫынран.
Палюк укҫа тӑвуҫӑн шухӑшлать:
«Тата мӗскер илем-ши пурнӑҫран?»

* * *

Чӗкеҫӗм, тӳпене ҫапать сенкер,
Кил, пӗр-пӗрне тепре савса илер.
Каҫ кӳлӗм, сарӑ кайӑк сас парсан,
Каллех часрах ҫак вырӑна килер.

* * *

Йăлтах, йăлтах илессĕн ырлăх ытамне
Этем хăй аркатать тĕнчемĕр тытăмне.
Ун пек чухне мĕн тутăр çут çанталăк?
Ирĕксĕрех çĕклет вăл океан хумне.

* * *

Çын умĕнче тухас тесе ырра
Май çук йăпăлтатать тӳре-шара.
Хаçат çапаççĕ, эй, укçа тăкаççĕ...
Мĕн пулнă-ши вара? Суйлав, ара.

* * *

Хисеплĕ хăтапа тăхлач,
Çакна шута илни пăсмасть:
Чие çулçи ӳксе пĕтмесĕр
Çич юр çусан та хĕл лармасть.

* * *

Каллех кĕрӳшĕн çӳçĕ-пуçĕ тăрмăк,
Кин питĕнче — куççулĕ уснă хăрпăк.
Эй, çамрăксемĕр, пуçăра ан усăр,
Кил вучахне чĕртме паратăп шăрпăк.

* * *

Вичкĕнлетрĕ йĕкĕт ухă йĕппине,
Тивертесшĕн пулчĕ пĕркĕт чĕрине.
Кăлăхах хăйратăн сăннуна, тăванăм,
Пĕркĕт те хăпартрĕ хăйĕн тӳпине.

* * *

О, Сафуан! Шур Атăл хĕрринче
Курай калатăн эсĕ ир çинче.
Сан кĕввӳне аван илтетĕп эпĕ
Атăлалла васкан Çавал енче.

* * *

Пульницаран, тăванăм, пăрăнсан,
Ун алăкне уçмашкăн вăтансан
Кайран сана хăйсем илсе каяççĕ,
Йăтса кĕреççĕ... наçилккапалан.

* * *

Хурамалсем — Çĕрпӳ, Йĕпреç енче,
Самар та Авăркас тăрăхĕнче...
Эй, Хурамал халăхĕсем, пĕрлешĕр! —
Тесе кăшкăрапах пĕррехинче.

* * *

Шур чул выртать ак... Калăн, кĕрнӳкер:
Чутланнă, тӳснĕ. Пурпĕр чип-чипер.
Тата вăл, ахăртнех, вăшкалсăр тăнлă,
Ăсне пули-пулми вакламанскер?

* * *

Пуçлăхсене, атьсем, юрамалла,
Пуçлăхсене, атьсем, юратмалла.
Салтак уставĕнче ахаль-им çырнă:
«Асли патне çапла çывхармалла...»

* * *

«Кăнтăрлаччен ан ĕç. Чăт, çĕр çăтасшĕ», —
Тесе вĕрентнĕ тет Пурхилĕн ашшĕ.
Ылтăн сăмах каланă вăл пире,
Ĕçчен сухаçă, Çĕн Йĕлмел чăвашĕ.

* * *

Эп тĕлĕнсе каятăп Моцартран:
Хавхалану хĕлхем тăвать çукран.
Чĕр çиçĕмле çиçет те шуçăмччен
Çĕн опера хывать вăл — «Дон Жуан».

* * *

Чӑн чӗрӗлнӗ! Чӑн чӗрӗлнӗ! Анчах
Мӗн сӑлтавпа-ши туртӑнать янах:
Кашни пӑхать хӑй тавралла сип-сиввӗн
Паяр майри Морозова майлах?

* * *

Хитре сӑмах ҫаптарасси — пӗрре,
Паха хайлав ҫуратасси — тепре.
Ҫӗн кӑшӑла тирпейлӗн сӑвӑрмашкӑн,
Тен, ҫил ҫукки чӑрмантарать пире?

* * *

Парнас сукмакӗсем ҫинче
Ҫып-ҫывӑх сӑнсемех инҫе.
Вара Хусанкая уҫатӑп,
Туяп ун куҫӗнчи ӗнче.

* * *

Çăрха ут чĕлпĕрне йăтать çăрхах.
Тĕшше пур сиенрен сыхлать çурхах...
Сăмах тени — ик енлĕ: çăмаха та
Пĕри парать ик хак, тепри çур хак.

* * *

Тĕнчемĕр — тĕрлĕ: Шурă Керменре
Щербицкий ал парать Сементере.
Унтан тухсассăн ик ыйткалакан
Калаççĕ: «Сăвăç, хĕрхенсем пире».

* * *

Тус хăлхине кĕртес тесех калам:
Мĕн ĕмĕр уншăн айăплă такам.
Хама кăштах эп уйрăмрах куратăп:
Пур çылăхшăн та айăплă эп хам.

* * *

Ирĕксĕртен тивет тӳре пулма,
Тивет çемçе пукан çине ларма.
Ирĕксĕртен — татăклăнах калатăп —
Парнас çине май çуккă хăпарма.

* * *

Тимуш еврей çуртне кĕрсе курасшăн.
Май пулайсан хăй евреe тухасшăн.
— Еврей-и эс? — ыйтать унран хуралçă.
— Хмм... Çук.
— Эппин, вĕçтер тархасшăн.

* * *

Укçа пухать сăрлавçă Якуркка.
Поэтсене чĕнесшĕн Якуркка.
Вĕсем чăваш малашлăхне мĕнле
Курни çинчен пĕлесшĕн Якуркка.

* * *

Туясăра каларĕ туялли:
— Уксах вăл — уйрăм пултару палли.
Элкер те, Хусанкай та уксахланă,
Туя тени — ăс-хакăл япали.

* * *

Шыв анчĕ. Мăн Çавал хĕррипеле
Çӳрет поэт хăй шухăшĕпеле:
«Ĕнер силлабо виçипе юхатчĕ,
Паян сикет — хорей сиккипеле».

* * *

Ачи çырать акăлчанла хайлав,
Мăнукĕ — французла тĕпчев-шырав.
Аслашшĕ çĕр улми çине тухмашкăн
Илет чĕрес, чăн-чăвашла карлав.

* * *

Ялан ыйтап: «Çӳлти Аттемĕр, пар ăс,
Ыр çынсемпе утса пырасчĕ харăс».
Çапах та ватăлсан кăна ăнлантăм —
Кам пулнă Александр Гельфанд-Парвус.

* * *

Сунарçă тек йĕрлет чее тилле.
Леш пытарать йĕрне яланхиллех.
Сунарçă-сăвăç, тупнă шухăшна
Каллех çухатрăн... шăнкăрч чĕппилле.

* * *

— Пуçна ан ват, ăсна ан яр сая, —
Тет кантăк витĕр капăр кăсăя.
— Çĕр аялта, çӳлте кăвак тӳпе,
Ытти вара, тăванăм, йăлт суя.

* * *

Санпа пĕрле пулас килнипелен
Ӳпле эп турăм хăмăш çыххинчен.
Вăрманалла самантлăх çеç тухсаттăм —
Ман ӳплере... вырта парать çĕлен.

* * *

Те шурă акăш пултăм эп, те варкăш —
Вĕçес хавасăм — çут тĕнче сарлакăш.
Анчах çитсессĕн алăкăр тĕлне
Сасартăк пăрăс ячĕ хучĕ тахăш.

* * *

Чуна кăвар пек пĕçертет кĕвви,
Анчах ытла та сулчă-çке сăвви.
Ах, васкаса нумай тăвать-çке йăнăш
Çемье çавăрнăçем кун-çул тĕвви.

*   *   *

Кĕрлет эстрада хăлхана çураслăн.
Йăлттам çи-пуç та электронлă сасă.
Епле аванччĕ, тантăш-тусăмсемĕр,
Çак шăв-шавра кăшт чун тени пулсассăн.

*   *   *

Пуçри шухăшăма уйла-уйла,
Калас сăмахăма суйла-суйла
Пĕрре килте эп тăр пĕччен ларатăп,
Тепре тус-юлташпа кĕрлеп туйла.

*   *   *

Хĕр йлес чух, ачам, ан тыт нăхта,
Çĕн чĕн йĕвен туяниччен тăхта.
Урхалăхра курăс пăяв курас тăк
Мĕнле хак парĕ ман пулас хăта?

* * *

Ĕмĕтĕмри сăртсемпеле тусем,
Сире эп ыталап ватăлнăçем.
Çӳлтен пăхсан авантарах курнаççĕ
Айăпăмсем... тата çылăхăмсем.

* * *

Калаттăм чĕрĕк ĕмĕр каялла:
«Поэт сăмахĕ — хаксăр япала».
Паян, укçа мала тухса пыруçăн,
Сăмах хакне те тупрĕç пулмалла.

* * *

Тек тăрăхлатчĕ хам ентеш Хаджи:
«Пул, — тетчĕ, — хамăр сăмахсен патши».
Паян урхалăх, чӳлĕк çĕтнĕ евĕр
Пĕтсе пырать чĕлхен тути, шăрши.

* * *

Пирĕн енче ĕлĕксенче шӳтлетчĕç:
«Вĕт-шакăрсем вĕсем йĕрсех ӳсеççĕ».
Ман шутпала, вĕсем йĕрсе çеç мар,
Вĕсем... çил хирĕç вĕрнипе ӳсеççĕ.

* * *

Мĕн айăп турăм сан умра эп, сăвă? —
Чунра лăшне пами çĕклетĕн тăвăл?
Тин çеç кăштах лăпланнă пек пулатăп,
Çав самантрах çапан эс çĕнĕ савăл.

* * *

Поэзи ĕçĕ — футболпа пĕрех:
Хăш чух тапса кĕртетĕн эс тӳрех.
Тепĕр чухне ирччен ларсан та мечĕк
Тарасшăн хапхана кĕмесĕрех.

* * *

Вакки çук чух ваклатăн мăн укçа
Пĕрре те уямасăр тухăçа.
Йĕрки кирек ăçта та çав майлах-мĕн:
Кăштах вĕтелтĕн — юлтăн эс хыçа.

* * *

Усал та, ырă та ялан ик енлĕ.
Пулăмсене хаклас тесен йĕркеллĕн
Вăрра та ăнланма тăрăшмалла:
Чыссăр ĕçе ирĕксĕртен вăл ернĕ.

* * *

Эс, ачам, кăлăхах итлеместĕн мана —
Хăш чухне çил уçать умăнти сукмакна.
Асăрха: Кремль çине вырнаçтарнă ялав та
Çил ăçтан вĕрнине чип-чипер пăхăнать.

* * *

Хавхалану, çĕн мехеле пуç тай,
Анчах явап çинчен манса ан кай.
Ав Кĕçтенттин: «Шел, кĕтнĕ пек тухмарĕ», —
Тет «Нарспине» çырса пĕтернĕ май.

* * *

Чĕлхемĕрте мĕн ĕмĕр йăлтăр-йăлтăр
Çиçсемччĕ, пулăх кӳрекен çут çăлтăр.
Эс тăлăх мар: ав Авиценна амăшне те
Çав сумпалах ят хунă ашшĕ — Çăтăр.

* * *

Вĕренме те ăс кирлĕ,
Ĕçлеме те ăс кирлĕ.
Çын çинче çын пек пулма
Ăспа пĕрле чун кирлĕ.

* * *

— Пулман пулсассăн çакă ик çыран
Çавал мĕнле юхатчĕ-ши ыран?
— Ан тĕлĕн, тусăм. Шыв та çын пекех:
Хăйĕн çулне вăл хăй уçать ялан.

* * *

Кăтартрĕç: Меккăра чулпа хĕнеççĕ
Шуйттансене, килсе сиенлесрен.
Хивреленсен те тĕрлĕрен конфесси
Кив тĕн выртать чĕп-чĕрĕ никĕсре.

* * *

Ирпе ирех сĕнет паян чĕре:
— Тен, ятлар мар, — тет, — хамăрăн чире?
Тен, калаçсассăн çепĕççĕн, ачашшăн
Çăмăллăхне вăл паратех пире?

* * *

Килнех тесе кайӑк сӑмси ларттартӑм,
Каяп тесе те пичетне пустартӑм.
Йӑл ҫиҫӗм евӗр ҫиҫсе иртнӗ пурнӑҫ
Командировка ҫеҫ — ҫавна ӑнлантӑм.

* * *

Куккук авӑтнине тӑнлать Куҫук.
— Ҫук-ҫук, ҫук-ҫук, — тет вӗҫӗмсӗр куккук.
— Мӗн ҫук пирки эс хурланан, чӑпарӑм?
— Ик ӗмӗр пурӑнмашкӑн майӗ ҫук.

* * *

Хуламӑра ҫурхи илем кӗртеҫҫӗ,
Урам ҫӑкисене каллех иртеҫҫӗ.
Пире те ҫав майлах иртсе тӑрать
Шӑпамӑр — те тӳре вӑл, те тирпейҫӗ?

* * *

Кайăк йăви те, çурт та — çав тăмах.
Хыпар — усал-и, ыр-и — пĕр сăмах.
Мĕн ĕмĕр тăршшипех — ниçта хăпмасăр! —
Пирте çӳреççĕ тамăк та çăтмах.

* * *

Сив сăмахпа çапса хуça-хуça
Хăйне çынран ăсла хурать хуça.
Ун ăшĕнче — витĕртерех пăхас-тăк —
Чун вырăнне чăштăртатать укçа.

* * *

Чун тухăçĕ кĕрешĕ анăçпа,
Ĕç туртăмĕ тавлашĕ канăçпа.
Пĕрре хĕвел хура тухас пулсан та
Эпир, тăван, пурнар-ха шанăçпа.

* * *

Ку ĕçĕ ĕнтĕ пулнă ĕлĕкех,
Анчах паян кĕрет ман тĕлĕке:
Вантер Курийĕпе Хĕветĕр Павлов
Каяççĕ Танăш витĕр Элĕке.

* * *

Шкулта çав ачана ăнланаймарĕç,
Чăн-чăн пĕлӳ палли лартса памарĕç.
Анчах та пурнăç авăрне лексен
Вăл пулчĕ никамран маттур хастарăç.

* * *

Лашунаваскатса ан хĕне пушăпа.
Нушапа эсĕ килнĕ, каян нушапа.
Çич синкер хушшинче такăнса ак ӳкен те —
Пускилӳ хак парать сăхсăхуçăн: «Шăпа».

* * *

Пуçран тухсан та шурă пас пек пăс
Килпетсĕр сăмахпа ĕçке ан пăс.
Тыт асăнта: ар çын ĕçкин илемĕ —
Вут-хĕмлĕ çиçĕм евĕр çивчĕ ăс.

* * *

Тавах! Умра кăлтăртатать çăмха.
Хăлха çунаттинче — хура тăмха.
Эп çăтмаха пĕрре те асăнмастăп,
Хам ирĕкпех кĕретĕп тамăка.

* * *

Йăмраллă ялăм, ытарми кĕтесĕм,
«Вĕç, вĕç куккукупа» хитреччĕ эсĕ.
Мĕн пулнă-ши сана? Укăлчара
Каç-каç янрать «Огинский полонезĕ».

* * *

Чун варринчи тымар-çылăхăма
Таса Аттемĕр пулчĕ кăклама.
Кăкларăм терĕ. Пурпĕр хама хам
Пултараймарăм эпĕ каçарма.

* * *

Сар кайăк пек пулас киленӳпе
Ши! шăхăртăм эп кайăк çеммипе.
Сас пачĕ ват юман çинчи çăхан
Ĕç тухаймасть, тăванăм, тенĕ пек.

* * *

Тăван кĕтес, ан тив, эс чухăнрах,
Çавах чуна туртатăн хытăрах.
Ахаль-им тинĕс урлă, тундра урлă
Афиногенваскать Шупашкара?

* * *

Ах, йӗкелӗм, йӗкел, каҫхине
Мӗншӗн ӳкрӗн лаптак чул ҫине?
Халь, кала-ха, мӗнле яраян
Шур чул витӗр тымар ҫиппине?

* * *

Юратăва пуҫ тайнипе пӗрлех
Унран асăрханма та пӗлмелле.
Куратăр-и, уй варринчи юман
Ҫиҫӗмпеле ҫунса каять епле?

* * *

Ăсран-тăнран тухсассăн вӗрилле
Юратăва ăсатрăмăр пӗрле.
Анчах та вăл вăранчӗ, тăчӗ, пычӗ:
— Мӗскершӗн пытаратăр чӗрӗлле?

* * *

Çулăмпала çунса ларать шерпет.
Улах саманчĕ — ытарми тивлет.
Пĕрне-пĕри ăнланмасан, чĕкеçĕм,
Тур панă вăхăт уссăрах иртет.

* * *

Мĕнле хитре хĕрарăм, эй, тĕнче,
Асилтерет вăл тӳпери ĕнче.
Анчах... çывăхарах пырсан ăнлантăм:
Эрех ташлать иккен ун ăшĕнче.

* * *

Леонардо да Винчи ансат сăрăпа
Кăмăла сăнарланă куçри кăварпа.
Çулĕсем иртнĕçем улшăнать-мĕн тĕнче:
Халь хĕрсем кăтартаççĕ пире... кăвапа.

* * *

Мĕнле илем çурхи çеçкелĕхре,
Мĕн чухлĕ шанăç çуллахи ĕçре!
Кĕр мăнтăрĕ кĕрсессĕн пӳлмене
Пуш анкарти те хăйне май хитре.

* * *

Ай-хай пуян чун туртăмĕн арчи!
Унтан та ытларах-мĕн сунарçи:
Сана чĕнет çĕр тĕрлĕ илĕртӳлĕх,
Анчах та эсĕ — масар ен тарçи.

* * *

Пылак сăмах юхать — ăçта виçи?
Шерпет шăнкăртататать — ăçта виçи?
Уйăх алки пек харшă айĕнчен
Каллех сар хĕр сăнать — ăçта виçи?

* * *

Тав тунӑ куркана, тӑван, тытма пӗл,
Тӑван кӗрекине пуҫна тайма пӗл.
Сӑрин сипетлӗхне чунпа туйсассӑн
Уяв шайӗпеле сӑмах тупма пӗл.

* * *

Ҫурхи уйра ҫӗрӗк улма шырать ача.
Кӗпи ун — лӗпӗр-лӗпӗр кайнӑ улача...
Пӗр чӗптӗм ҫӑкӑрсӑр,
пӗр хӳтлӗхсӗр пулсан та
Илӗртетех ачалӑх — пуш пахча.

* * *

Кӗмӗл кермен лартма шут пур тесе
Ентешӗм пит калаҫрӗ ҫӗкленсе.
Паян вара хӑйне масар ҫине
Пытаркӑҫ лавӗ кайрӗ тиесе.

* * *

Аннеҫём, эп те Чантăра каям-и?
Унта паян килет чăваш Хаямĕ.
Ăслă ҫынна куҫран пăхса илсен
Чее шăпа, тен, хăвăрт улталаймĕ?

* * *

Калаҫҫĕ: хулпуҫҫи тытать пуҫа,
Ăс-тăнлă пуҫ — этемшĕн чăн хуҫа.
Туйăмĕпе пророк пекех пулсан та
Ҫынсен тĕрекĕ кирлĕ сăвăҫа.

* * *

Ман вăхăтри ҫынсем астумалла
Уйра шăрт евĕр юлнă хăмăла.
Яш сăвăҫ, сан пулса пĕтмен юрру
Хăмăл пекех шăртларĕ кăмăла.

* * *

Эх, пĕчĕк пӳрт... Мĕнле вăл шавлăччĕ,
Малашлăх сассипе вăл савăкчĕ.
Халь ун патне пырса пуç тайрăм та —
Ман еннелле çурăмĕпе вăл çаврăнчĕ.

* * *

Лука калать: «Христос çуран утатчĕ,
Чапран та, укçаран та пăрăнатчĕ...»
Халь кур-ха эс, епле çиçсе пырать
Таса аттен çут «мерседес» хăлачĕ.

* * *

Халь кам пуян? Чее этем пуян.
Кӳрше путар та — ху мала тухан.
Тĕлĕнмелле: синкерлĕ юхăмра
Паян чиркӳн те пур-мĕн бизнес-план.

* * *

Этем касать ӳсес хыр-чӑрӑша, —
Часрах услам тӑвасшӑн тӑрӑшать.
Вӑрманӗ тӗлӗнет: «Ҫын ӑслӑ теҫҫӗ,
Мӗнре вара ун ӑсӗ, апӑрша?»

* * *

Сисмен ҫӗртен эп хӑвӑртрах утатӑп,
Алла хитре чечек ҫыххи тытатӑп.
Чӗкеҫӗм, кашни кун сана валли
Чи тивӗҫлӗ сӑмахӑма шыратӑп.

* * *

— Мӗнрен сипет илет ҫурхи ҫаран?
Ӑҫтан хавхалану илет вӑрман?
— Пур чӗрӗлӗх хавхалану илет
Юратуран, савни, юратуран.

* * *

Хама тарăхнипе çыхсаттăм тĕвĕ.
Анчах та сан чунри асамлă кĕвĕ
Ачашшăн салтрĕ тӳртĕнле тĕвве...
Санра иккен тĕнче ыррин тĕллевĕ.

* * *

Тутартăм эпĕ чĕнтĕрлĕ кĕпер
Санпа каçса çӳрес тесе чипер.
Пире пĕр-пĕринчен сивĕтекенĕ
Пулайрĕ тăчĕ чĕнтĕрлĕ кĕпер.

* * *

Ешер, чечек, ешер кĕреннĕн, шуррăн,
Сĕрен ытамĕ пек, пахчаçăм, çурăл,
Юрлатăр шăпчăк... Унсăрăн, тăванăм,
Пире тĕп тăвĕ электронлă юрă.

*   *   *

Кантăксенче поп ташăсем кĕрлеççĕ,
Вун хутлă çурчĕсем тăр-тăр чĕтреççĕ.
Пӳртре сикет çатми, витри, хуранĕ,
Тимĕр çынсем тискер шава итлеççĕ.

*   *   *

Ачам, хитре ларан эс ут çинче.
Анчах ут яриччен Трак пуххинче
Суха туса уя шуратмаллаччĕ
Пиçен хупланă Ункă хĕрринче.

*   *   *

Сар кун çĕршывĕ — Атăл тăршшинчи
Чулман, Нухрат, Шур Атăлсен тĕнчи.
Çӳл тӳпери мăн Алтăр çăлтăр евĕр
Çиçмест-ши унăн авалхи ĕнчи?

* * *

Чăваш мĕн ĕлĕкрен, мĕн авалтан
Çын-мĕн çинче сăмах пит вакламан.
Çакна тĕнчемĕрсен хутлăхĕнче
Саккун тесе шутланă Унтриян.

* * *

— Мухтавлă лирик, каççерен тухса
Ларатăн эсĕ çăлтăрсем суса...
— Ан чăрмантар мана... Кĕтетĕп эпĕ
Хавхалану саманчĕ анасса.

* * *

Çĕр çывăрми çыратчĕ Улаксар,
Кăтра пĕтрешкинчен юхатчĕ тар...
Таçта кайса çухалчĕ ун сасси?
— Пама пăрахнă теççĕ гонорар.

* * *

Эй, Сементерӗм, эсӗ кам пулан?
Ҫапла хакланипе, тен, ҫырлахан?
Эс — шур ҫӳҫрен пӗрре те хӑрамасӑр
Яш ӗмӗре ватта ҫавӑракан.

* * *

Лӑпкарӗ ҫичӗ тинӗс анлӑшӗ,
Йӑл кулчӗ ҫичӗ ту йӑпатмӑшӗ,
Ҫапах татах та ҫывӑхраххӑн
Эс курӑнтӑн, ҫуралнӑ Танӑшӑм.

* * *

Кантӑк пӑрӗ ҫинче — ытарми чечексем,
Юмахра кӗмӗлленнӗ асамлӑ хӗлхем.
Чӗрери туйӑма кӑшӑла ҫыхиччен
Вӗҫрӗҫ кайрӗҫ умран кунӑмсем-ҫулӑмсем.

* * *

Ма Одер шывӗ урлӑ каҫрӑн тетӗр,
Ма Эльба кӗперне кисретрӗн тетӗр.
Хӑвӑр пӑшал тытса курмарӑр та —
Мана салтак пулнишӗн халь тиркетӗр.

* * *

Эй, сӑвӑҫ тусӑмсем, хастарлӑ халӑх,
Тытар черкке ӑшра ҫӗн вут хыпмалӑх,
Вара ҫывӑхарах курнать Парнас,
Ун тӑрринче яр уҫӑлать ҫӗн алӑк.

* * *

Кӗтсеттӗм пурнӑҫран сӑваплӑ ырлӑх.
Мана каларӗҫ: «Ҫурални те ҫылӑх».
Вара пачах та ҫук-шим, тӑвансем,
Иртнипеле малашӑн ҫураҫулӑх?

* * *

Çăлтăрах та витĕр çул выртать.
Çав çул пире ăçта йыхăрать?
Çав кĕмĕл çул, туссем-тантăшсем,
Çамрăклăха тӳнтер тавăрать.

* * *

Хăй йĕркипе пырать тĕнчемĕр ĕçĕ.
Ăçта ун пуçĕ, хăш енче ун вĕçĕ?
Этем унпа хирĕçĕве кĕрес тĕк —
Тӳрех сӳнсе ларать малаш инçечĕ.

* * *

Чечек çыххи ак ӳкрĕ татăлса.
Тулличчĕ уйăх — юлчĕ катăлса.
Çĕр çаврăмне пылпа кулач сĕнсен те
Санпа вăл калаçаймĕ чарăнса.

* * *

Çук, ывăнмасть тĕнчемĕр мыскари,
Саккун кĕнекине уçа-уçа
Çӳç илтерме хушсассăн Мускаври
Шупашкарти кассах татать пуçа.

* * *

Тĕлĕрет ик кĕпçеллĕ пăшалăм.
Тен, ăна авăрлас кĕр енне?
— Тыт мана, янратсам, — тет кавалăм, —
Çын ăнланмĕ кăрал кĕввине.

* * *

Куçран савса пăхать вĕри хуплу та,
Кĕрнеклĕн пăсланса ларать вĕри шӳрпе.
Аннеçĕм, çӳреен-ши эсĕ тутă
Сан ятупа эп кашăк хунипе?

* * *

Пылак та йӳçĕ... Хирĕçлет пуль тейĕн
Вĕсен тути-маси пĕр-пĕрине,
Çапах пылак сăмах калас тесессĕн
Çынсем йӳççи сыпаççĕ хăш чухне.

* * *

Чăнлăх кĕç килессе ан шансам эсĕ пит,
Ху пĕлетĕн: этемĕн ик куç, икĕ пит.
Сулахай сылтăма çăмăлах ăнланаймĕ,
Çавăнпа ултава ултавпах эсĕ вит.

* * *

Лараççĕ иккĕн. Виççĕмĕш кĕрет.
Халап-юмахĕ хĕрнĕçем хĕрет.
Хуçи ыйтать: «Тата кама çиер-ши?»
Пуш панккава çапла татать кĕрет.

* * *

Эп хаҫат туянап. Ячĕ ун — «Тăр-тăри».
Тем хыпарĕ кĕтсе ик енне яр уҫатăп.
Паччушки! Сиксе тухрĕ парне пек, хуҫа пек
Аякри штат хăни — колорадо нăрри.

* * *

Лĕх-лĕх кулса тăрать чее тĕнче:
Раҫҫейĕн сумĕ — пенси шайĕнче.
Хуҫа ăна ыран ҫĕклес пулсассăн —
Хак паянах ӳсет сентресенче.

* * *

Юр кайнă чух епле-ха эс пултарăн
Юр макăрать, юр парăнать теме?
Юр хăй вилет, анчах ҫакать таврамăр
Пахчи ҫине шап-шурă шӳлкеме.

* * *

Кашнин — хăй çулĕ, хăй утан урамĕ,
Хакланă чух çакна манса ан кай:
Ухсай пичче «Тилли юрри» юрламĕ,
«Кĕлпук мучи» хайламĕ Хусанкай.

* * *

Пĕлĕтпеле çĕр пичĕн чиккинче
Ăрша вылять хĕвел чĕрçиййĕнче.
Пире пилленĕ çамрăк ĕмĕрсем
Хура чĕкеçĕн çунатти çинче.

* * *

Чакăлланса ларать ав хура ту.
Хăпарасах тесен — çакна асту:
Хăпарнă чух аллу-ура та çĕклĕ,
Аялалла антарĕ — çунату.

* * *

Телейшĕн эс çунатăн кăлăхах,
Шыра-шырах юлатăн тăлăха.
Телей тени килсен килет самантлăх,
Асра тытсам ялан çак чăнлăха.

* * *

Ем-ешĕл юррине юрлать ката,
Хумсем юхать мăнаçлăн аната...
Хăлат пек ярăнса вĕçес килет,
Анчах пире тăллана таната.

* * *

Мĕн пĕчĕкрен хушса пырса маттурлăх
Пире ялан кӳресшĕн эсĕ ырлăх...
Анчах сана хисеплеме пĕлмесĕр
Эпир мĕн чухлĕ шар куратпăр, сывлăх?

* * *

Уйри шур чул тĕсерĕ куçăмран:
«Салам сана, тăванăмçăм...» — «Камран?» —
«Пин çул калле шăпах çак вырăнта
Пăлхар юрри юрланă юрăçран».

* * *

«Эй, вăрман, чĕрери асапа йышăнаймăн-ши?»
«Эй, уй-хир, пуçăмри хуйăха пусараймăн-ши?..»
— Ах, атьсем, никама та ан çӳрĕр сĕнсе,
Килĕр, кӳрĕр хама, — терĕ татăклăн амăшĕ.

* * *

Тĕлĕнмелле: хам çул шутне çухатрăм,
Çыра-çыра хисеплеме пуçларăм.
Мĕн калама пĕлем-ши кун пирки?
Хĕпĕртесех пуçлас, тен, çĕнĕ ярăм?

* * *

Тухтăрăма çакна пĕлни пит кирлĕ:
Тăван чĕлхем тухатнипе эп чирлĕ.
Ытах кăмăлăма çĕклес тесессĕн
Манпа пупле-ха чăвашла эс вирлĕн.

* * *

Васильев, Федор... Кўршĕ пулнă май
Пĕрле сăмах суйларăмăр нумай.
Пит шел, пичче... Чăваш кĕвви çинчен
Кампа халь калаçам-ши? Çуккă шай...

* * *

Кăçал кăрлачшăн тав тăвать пуль нарăс:
Ял-хулине, хир-вăрманне пĕр харăс
Хĕл Мучисен шап-шур патшалăхне
Илсе каять çил карăнтарнă парăс.

* * *

Ача кăкăр патне ăнтăлнă пек,
Тӳпе ытамĕнче туйса тĕрек
Чăваш ырашĕн сĕрĕшен ани
Сар хĕвеле пуçне таять-çке тек...

* * *

Тин çеç-ха сӳнчĕ кăкăрти кăвар,
Шăпам каллех сĕнет кача тăвар.
Тăванăмсем, умри йывăрлăха
Шӳт-кулăша мĕнле-ши çавăрар?

* * *

Несĕлсене пилленĕ Пихампар,
Çулсеренех пире пĕрер хăм пар
Тесе ыйтсан чикен-ши хăлхуна
Е тарçуна текех палласшăн мар?

* * *

Ёнер вылятчĕ йăмпăлтак пулли,
Паян ейӳ выртать çырма тулли...
Ялтан та тухаймарăмăр пулсан —
Уçать-ши хапхине Хусан хули?

* * *

Хурах пусса çӳренĕ-мĕн Тиллит,
Хурсем пусса ăсатнă-мĕн Тиллит.
Хăйне хурсем хупăрласа илсен
Хур кайăк пулса вĕçнĕ-мĕн Тиллит.

* * *

Шухăшăмпа çӳлте вĕçе-вĕçе
Манмарăм-ши эп хамăн тивĕçе?
Ахальлĕн ма хĕвеллĕ ирсерен
Ӳркевлĕн çеç тытап лаçри ĕçе?

* * *

Ах, аннем... Çемçен кăна утаттăн,
Тен, çĕре амантасран хăраттăн,
Ман тĕле тухсассăн çавра çил
Пурпĕр çавăрса яма пултартăн.

* * *

Пĕлетпĕр пурте: кăткăн пĕр тĕллев —
Татах çĕклесчĕ пысăкрах тиев.
Пĕр чăваша эп витĕрех куратăп,
Ун чи юратнă ĕçĕ — çынçиев.

* * *

Килсе вырнаçрĕ шăпчăк пахчана.
Çĕн сывлăш çитрĕ пĕтĕм таврана.
Чим, хапхара — çĕн тупăк... Çуркунне те
Илсе кайма пĕлет иккен çынна.

* * *

Усалли ялан ырра йĕрлет,
Вĕсен çулĕ йĕкĕр-йĕкĕрлех.
Мĕн тăвайăн: путсĕр Каина та
Асилеççĕ Авельпе пĕрле.

* * *

Юрать, матери мар сăмах,
Вăл çăмăл варкăш пек анчах.
Ахальлĕн вăл пулса каятчĕ
Çĕрĕмĕртен йывăртарах.

* * *

Туссем, пирте ачалăх пурăнать:
Е ывăлăн, е хĕрĕн вăл анать,
Унта вара, çĕн сыпăк хутшăнсассăн,
Мăнук пулса алла вăл таврăнать.

* * *

Кантăкран кĕресшĕн ăмăрт кайăк.
Ман кĕрекере ларать сар кайăк.
Иккĕш пĕр-пĕрне ăнланмасан,
Чим-ха, эп каллех тăвап-çке айăп?

* * *

Пахчасенче пиççе хуралчĕ иçĕм,
Тӳпесенче çиççе ĕшенчĕ çиçĕм.
Эп çеç çунса тухас пек тунсăхлатăп,
Самантлăха та манăçми савниçĕм.

* * *

Мана эс пĕр сăмах та каламарăн,
Каç-каç чĕре юрри те юрламарăн.
Пĕрре куçран пăхса илнипелех
Хĕлхем пулса чунра çӳре пуçларăн.

*   *   *

Ма кăтартрăн мана эс çакна, укăшка:
Пĕр хĕрпе ирĕлсех калаçать упăшка.
Чӳречеçĕм, халех карруна эп каратăп, —
Ман маттур упăшка çӳрес çук унашкал.

*   *   *

Эй, сăвăçă, пуçна усса ан лар,
Куляннипе курайман пархатар.
Хĕвел пĕр пек савать иксĕмĕре те,
Ун ăшшипе пĕрле çунат хушар.

*   *   *

Ик кил хушши, ятулăх, çывăхлăх.
Пĕрле кайса касар-и çулăклăх?
Мĕн калаçни, кулни, пускилĕмсем,
Хушшăмăра ан кӳрттĕр çылăхлăх.

* * *

Туссем, ан шырӑр тӳпере Турра,
Вӑл пурӑнать чунра, юратура.
Ыр хум вӑйне туять пулсан чӗремӗр —
Эпир те ҫав сӑваплӑ юхӑмра.

* * *

Ҫил арманӗ пулса ҫаврӑнтӑм,
Йӗлме тупан пулса ярӑнтӑм.
Пурпӗрех ҫу ҫулӗпе кайса
Пыл ҫулӗпе киле таврӑнтӑм.

* * *

Ярнатӑп эп ачалӑх сӑпкинче:
Умра юмах пек ҫаврӑнать тӗнче.
Чи ҫывӑх сӑн, чунпа, куҫпа пӑхсассӑн,
Хӗвел пек ҫывӑх, хӗвел пек инҫе.

* * *

Сана шанаттăм, çывăх çын шутлаттăм:
Чи вăрттăн шухăша санпа пайлаттăм.
Халь пĕлтĕм: эсĕ сутăнчăк иккен,
Ман ăш-чике кĕрсе вырнаçнă атом.

* * *

Çынна усалпала тавăракан —
Усал валли çĕн вăрлăх акакан.
Кам тарăхнă — килсемĕр ман пата,
Эп усала ырра çавăракан.

* * *

Пĕри мана чикме сĕнесшĕн мул.
Калать: «Мул пек пуян та ăслă пул».
Анчах çын тӳпине илсе чиксессĕн
Вĕсем валли тăрса юлать-çке чул.

* * *

Мĕн чухлĕ çĕнтерӳ кĕперĕ
Вăрçă чухне хывма тивмерĕ?
Пĕр каçмине хывтараканĕ —
Алга, кĕперçĕ элтеперĕ.

* * *

Шупашкар керменĕ улăпланчĕ,
Манăн кантăк хĕвелтен хупланчĕ.
Шырасан кунта та пур сăваплăх:
Ăраскалăм пускилпе пайланчĕ.

* * *

Пур çĕр те çывăх, пĕтĕм халăх — лайăх,
Паллаш та пурăн ĕмĕр савăнмалăх.
Çапах чĕре уявĕ варринче
Тăрать чăваш — хама çуратнă халăх.

* * *

Патшасемшĕн кăна кирлĕ пулĕ эс, çар,
Вăрçăра юн тăкни этеме кирлĕ мар.
Тырă-пулă хумхантăр, ешертĕр пахча,
Хăтлăх кӳтĕр çурт-йĕр — ак мĕнре пархатар.

* * *

Лапка-лапка тăман çăвать, çăвать...
Мулкач сикет те çĕнĕ йĕр хывать,
Кунсем-çулсем иртсе пыни çинчен
Тăвата чикĕмпе хыпар тăвать.

* * *

Аслашшĕн мĕн пурри — мăнукĕн çук,
Мăнукĕн мĕн пурри — аслашшĕн çук.
Çапах çынсем ватăпала вĕтте
Пĕр пек тесе калаççĕ тепĕр чух.

* * *

Тăп-тăр шывра кĕркке вылять пĕр ушкăн,
Карасшăн хаклă теççĕ пылчăк, юшкăн.
Çапла, пĕри чунне таса усрать,
Тепри вара — чысне те сутĕ мулшăн.

* * *

Ăспа çиçен сăмах та пит аван,
Хĕмленекен сăмах та пит аван.
Анчах та виçинчен иртсе кайсассăн
Сутса яраççĕ иккĕш те ялан.

* * *

Укаллă улăх ӳхлĕмлĕхĕнче
Ухик шӳрпе пĕçерчĕ пĕринче.
«Юрать, мана çунтар халь, — терĕ курăк, —
Кайран эп шăтăп сан тăпру çинче».

*   *   *

Аçу та çĕрелле çывхарнă сан,
Аннӳ те тăхăр йӳн хăпартнă сан.
Хăвна та çав шăпах пил панă тетĕн.
Шанни аван. Çапах та — асăрхан.

*   *   *

Мухтав лаша тытма пĕлекене,
Мухтав укçа тытма пĕлекене.
Çапах та вĕсенчен те ытларах
Мухтав сăмах тытма пĕлекене.

*   *   *

Çынна тӳрех виçесĕр ан мухта —
Сăмах çырлахтараймĕ вăхăта.
Çĕн çил килсе вĕрет те пĕринче
Хăвнах тăхăнтартса ярать нăхта.

* * *

Чуру пек пăхăнсассăн та, шăпа,
Ялан йӗрлен эс касмăк пушăпа.
Ёнер тата... Пуç тайрăм çеç сана —
Пăхап: сикет тюлень пек мăн шапа.

* * *

Ан тив, вӗретчӗр пысăк хуранпа,
Ма вӗçӗм хăрататăр тамăкпа?
Укçаллисем урăх çӗре лексен те
Эп тамăкрах пулатăп халăхпа.

* * *

Çаклатнă пек тăха çине тăха
Çак çын çырать çăха çине çăха,
Куçран нимскер пулман пекех пăхма
Вӗреннӗ ик уралла аçтаха.

* * *

Пĕр пин çумне тепре хушать хĕсмет,
Иккĕшĕнчен те куланай ĕмет.
Чиркӳ те сутăнасшăн укçана...
Таса чунли, тен, ешĕл Киремет?

* * *

Хăйле шĕкĕлчесе ларса кăйтта
Тупать ăслайçă сумлăх та пайта.
Тепри ăна хирĕçленçи тăвать...
Суйи пайтах-ха. Чăнлăхĕ ăçта?

* * *

Сăмах илтетĕн е усал хыпар,
Кулянăва тымар яма ан пар.
Пиçен те йыт пырши тымар ярсассăн
Ай-яй тăпăлтармашкăн çăмăл мар.

* * *

Камсем эпир? Эпир чăваш пулатпăр,
Пин çул хушши çак çулпала утатпăр.
Ăçта эпир утатпăр? Мал енне,
Мĕн утнă пеккĕн хамăра шыратпăр.

* * *

Чукча, чечен, чăваш... Кашни расна,
Пĕрпеклĕхĕ — «ч» сас палли кăна.
Çапах, чили пулсан та, чех пулсан та
Пĕр хĕвелех-çке ăшăтать çынна.

* * *

Чăвашăн пулнă лайăх ен — сăпайлăх,
Ăна вăл кӳнĕ çирĕплĕх те стайлăх.
Халь, ĕмĕр чулĕ çавăрттарнă май,
Çыхланчĕ çĕнĕ туртăм, вăл — сыпайлăх.

* * *

Хитре çине хитре хăваласа,
Пикем, йăлтах-çке кайрăн çухалса.
Кайран ыр кăмăлли асна ак килĕ,
Ун чух ăна тупан-ши шыраса?

* * *

Пур халăх уяса пурнан чикке
Асăрхамарăн-шим, япшар пике?
Пурнăçунти пĕртен-пĕр телее
Миçе хутчен пайласшăн эс икке?

* * *

Ăçта мĕскер малта пырать? Чеелĕх.
Çапла пурнать ку таранччен этемлĕх.
Мĕн кирлĕ ЦРУ хыпарçине?
Пире шĕкĕлчеме шырать вăл меллĕх.

* * *

Хăш чух хĕвел кăтра шур пĕлĕт витĕр
Магнит пайăркипе тĕлленĕ евĕр
Вĕрин пăхса илет çынсем çине,
Эпир вара телей çав мар-ши тетпĕр.

* * *

Пурнăçăмра хыпаламарăм пурçăн,
Укçа мана хӳтĕлеймерĕ хурçăн...
Шăпам, манра эс айăп ан шыра,
Санпа чĕрре эп кĕмĕп çукшăн-пуршăн.

* * *

Ку ял мĕн сăлтавпа-ши савăннă?
Çынни выртать рет-ретĕн вăрăм кавăнăн.
Эх, ĕçкĕ... Эх, уяв... Çĕн уйăх та
Çавна курса халь хуçăлас пек авăннă.

* * *

Ёнер тӗпре тӑратчӗ пӗр виҫе,
Паян унпа ҫухатӑн тивӗҫе.
Эй, тӳресем те хуҫасем! Мӗн-ма
Пӗр чӑнлӑха пайлатӑр-ши виҫҫе?

* * *

Капмар юманлӑхри лутра шӗшке
Сар мӑйӑрне тума ай йывӑр-ҫке.
Тӗнче тени вӗҫӗ-хӗррисӗр аслӑ,
Ҫапах чуна ытла та тӑвӑр-ҫке.

* * *

Тар шӑрҫине сапа-сапа Хумма
Тупӑк тумашкӑн савалать хӑма.
Ах, хыр ҫункавӗ... Ҫавракa сӗвемӗн
Масар хыпарӗ пек ӳкет ума.

* * *

Илтсе салтакăн хĕлĕх-шухăшне,
Туйса салтакăн çиçĕм-кулăшне
Юнашарта Омар Хайям тăрать-шим
Тесе пăхаттăм эпĕ хăш чухне.

* * *

Сана ĕç кирлĕ, теприне — кану,
Ĕшеннĕ чуншăн хаклă лăплану.
Çапла хирĕçӳсен ылмашĕнчен-мĕн
Йĕркеленсе пырать аталану.

* * *

Каç сĕр урай, ирпе каллех ирех тăр,
Шывĕпеле вут-шанкине кӳрех тăр...
Талăкĕпех курайман канлĕх эс
Пуçлăхунта ларать пулсан ефрейтор.

*   *   *

Юртать Хушка... Килӳ çывхарнă май,
Тăванăм, ăслă лашуна пуç тай.
Ах, Сементер, çухалчăк Сементер,
Сан çеç çулу пулмарĕ яла май.

*   *   *

Шыв айĕпе хура вăйсем çӳреççĕ,
Хаяр вăйсем чĕре айне кĕреççĕ.
Халь çил урăх енчен вĕрет пулин те,
Çук, иксĕлмест хура вăйсен черечĕ.

*   *   *

Каллех иккен-ха тупăнчĕ пирке.
Апла пулсассăн — çи, кăшла, тирке.
Çын халь те кашкăр шайĕнче юлсассăн,
Хăçан çитет-ши чăваша йĕрке?

* * *

Лайăххи пур чухне усалли те пурах,
Юрату пур чухне ырату та пурах...
Мĕн çунать этемре — çав поэт чĕринче,
Анчах кăшт, анчах кăшт, анчах кăшт ытларах.

* * *

Хăй асĕнчи мĕн пулнă-пулмана
Çыравçă йăлт кĕртесшĕн романа.
Эпир вун çичĕ том çырса кайсан та
Этем ĕмри — шур хут листи кăна.

* * *

Сивĕ сывлăмлă ир. Кил кунта, Мандельштам.
Хытăркана чунна ал парса ăшăтам.
Эс хуллен утнăçем Натали йĕррипе
Эп юман айĕнче йĕкел евĕр шăтам.

*  *  *

Пĕрпеклĕх пур-ши: грўн тата кĕрен?
Иштек ачи тĕпчет çакна тĕпрен.
Шыравĕ сĕм Атилла ĕмĕрне
Ăна илсе çитерчĕ ерипен...

*  *  *

Ман Айташра кăштах туркайлăха курасчĕ,
Туркай вучахĕнче кăшт Айташа тытасчĕ...
Вара чăваш-пăлхар уявĕнче
Хĕмленĕччĕ çĕн шăрану хăвачĕ.

*  *  *

Малтан кунтиччĕ эсĕ, халь тулай,
Сук шывĕн тусĕ Карлин Микулай.
Сана чăваш юррин тулай министрĕ,
Тен, тумалла яту çĕкленнĕ май?

* * *

Эс, Тĕрĕслĕх, хĕвел çути пекех,
Çитес çĕре çитетĕн пурпĕрех.
Анчах та çутăпа танлаштарсан
Çулу сан уçăласшăн хĕнтерех.

* * *

Туссем, сум пичĕ килтĕр сумлăхпа,
Тум пичĕ килтĕр чăн ятулăхпа.
Чăвашăн тĕп ĕçне вара, туссемĕр,
Тăвар чунпа та иксĕлми ăспа.

* * *

Сиксе вĕрет мăн çырмари пĕр авăр.
Туссем, тен, ку пирĕн йышри пăлхавăр?
Айта часрах лăплантарар ăна,
Камра-ши тухату сăмахĕ, калăр?

* * *

Ытла хыт алхасан та иртĕхен,
«Ярам-и, — терĕм, — сан енне çĕмрен».
Халь çĕрĕпе куç хупманран пăхап та —
Хама çав сăнă лекнĕ чĕререн.

* * *

Хамра ялан курса тăрсассăн айăп
Тус-йышăма мĕнле-ха эп ятлайăп?
Çаплаччĕ эп хĕсмет кӳлĕмĕнче,
Халь — шухăш шухăшлавĕнче çапла эп.

* * *

Калаççĕ: «Шаккăр, шаккасан уçаççĕ,
Ыйтма пĕлсен мĕн ыйтнине параççĕ».
Кĕрес çĕртен хыçалалла пăхап та —
Ыйтас текенĕ мансăр та нумай-çке?

* * *

Паллах, аван пӗтӗмӗшле пӗлӳ,
Анчах тӗпре халь — сутупа илӳ.
Туян йӳнӗрехпе, сут хаклӑпа —
Ак мӗн иккен вӑл кӗтнӗ ҫӗнелӳ.

* * *

Тавах сана, кил умӗнчи йӑмра,
Тавах сана, ял вӑййинчи тӑмра,
Эп Эльба хӗрринче ҫӳренӗ чух
Сас панӑшӑн унта пыра-пыра.

* * *

Аннем, юлашки хут куҫран эс пӑхрӑн,
Ик сӑмах ҫеҫ каларӑн: «Тӗрӗс пурӑн».
Аннем, чӑнлӑх виҫи пулса каҫар,
Ытла, ытла нумай эп йӑнӑш турӑм.

* * *

Ян янраймасть чӗлхесӗр юлнӑ чан.
Кил пушанать ача сас памасан.
Эй, чун ҫеҫки, эй, аслӑ юрату,
Кашнин валли ӑшшу ҫитинччӗ сан!

* * *

Министр, эсӗ ӑслӑ, тав сана,
Анчах кӑткӑслӑхпа ан ил тӑна.
Кунра-ҫулра тытса пырасчӗ пирӗн
Сӑпайлӑ кӑткӑ йӗркине кӑна.

* * *

Юман ҫинчи виҫ ҫӗр ҫулхи ҫӑхан
Хӑй пурнӑҫне хурланине курман.
Ман мӗншӗн пурнӑҫа хурламалла,
Вӑл тӳснине эп тӳсес ҫук нихҫан.

* * *

Итле тет ватӑ, хирӗҫме ан хăй —
Пурах ман сăмахра та тӗрӗс вăй:
Лекмерӗ орден вăрҫăра, анчах та
Ҫитерчӗ ҫупкă... Ворошилов хăй!

* * *

Истори, тытса юл ҫакна асра:
Ҫирӗклӗре, йăмраллă пӗр касра,
Иван Рони, Нямань, Мӗтри Ваҫлейӗ,
Виҫ сăвăҫ ҫунатланнă харăсах.

* * *

Эй, ҫӗр ҫавра, туссем, хӗвел ҫавра,
Тӗнче вӗҫет хăй тӗнӗлӗ тавра.
Телейлӗ эп: этемлӗхӗн капашӗ
Паянлăха ҫак ырă ытамра.

*   *   *

Тек мухтанать ят-сумлă пĕр ăсчах:
«Çынна нихçан усал туман пачах».
Ăçтан пĕлес: пурне те каçарни,
Тен, чĕрере чĕртет усал вучах?

*   *   *

Хĕрарăм туртăнать арçын енне,
Арçын сисет хĕрарăм туртăмне.
Тĕнчи мĕн авалтан çапла пулсассăн
Кам улăштартăр пурнăç йĕркине?

*   *   *

Чечек пикем, сана куруçăн ĕлĕк
Пĕрре те эп хывмастăмччĕ-çке çĕлĕк?
Мĕн сăлтавпа эс тăтăн-ши пулса
Каçсеренех курнан асамлă тĕлĕк?

# КĔЛ ЧЕЧЕКСЕМ ÇИНЧЕ МЕРЧЕН ТУМЛАМ

* * *

Римсем, Женевăсем те Парижсем —
Тĕнчен ытарайми эрешĕсем.
Маншăн тесен çырмаллă Танăш ялĕ —
Чун-чĕремри нихçан сӳнми хĕлхем.

* * *

Мана сĕнетĕн çĕлĕк. Кирлĕ мар.
Çăм атă парнелесшĕн. Кирлĕ мар.
Сенкер ачалăх тĕнчине, тархасшăн,
Пĕр кунлăх та пулин, тăванăм, яр.

* * *

Хĕл умĕн те хĕрет тӳпе маччи.
Пахчан кашни çулçи — хĕвел ачи.
Ак вĕрене парни анать çӳлтен,
Салам тет ылтăн кĕрĕн тăлмачи.

* * *

Чиркӳ енче ян-ян тусассӑн чан
Ҫак йыхрава аса илеп ялан:
Ку ҫӗр ҫинче ик ӗмӗр пурӑнмастӑн,
Эппин, ачам, тархасшӑн, асӑрхан.

* * *

Шыв леш енче кӑмпа пекех сӑратӑр,
Тыркас ерсе чипер тырра ан кастӑр.
Эпир илес ятуллӑ хӗрсене
Ашшӗ-амӑш тӗрӗс-тӗкел усратӑр.

* * *

Ах, лайӑхчӗ мулкачи, ача пекех лайӑхчӗ,
Алран апат ҫиетчӗ, килти чӗр чун майлӑччӗ.
Анчах хусах ҫырминче иртнӗ раштав эрнинче
Татрӗ унӑн пурнӑҫне Уҫӑп ятлӑ кайӑкҫӑ.

* * *

Хуҫийӗ каллех тарҫине ҫаптарать.
Хуҫийӗ каллех тарҫине хӑтӑрать.
Мӗн айӑп тӑвать-ши вара ун тарҫи?
Иккен, хуҫине сахалрах пуйтарать.

* * *

Вӗренесем, шур хурӑн — ылттӑн, ылттӑн...
Пӑхса тӑрап — йӗрсе ярас пек хыттӑн —
Ҫак саманта чарасчӗ пӗр эрнелӗх,
Тытӑнтарма ӑҫтан тупам-ши тытӑм?

* * *

Ыраш уйне каҫхи сывлӑм ӳкмелле,
Ҫав сывлӑмпа тырра тутӑ кӗмелле.
Ҫӗр ӗҫлесе хуҫа пулас тесессӗн
Хресчен ачин ҫакна лайӑх пӗлмелле.

* * *

Пурçăнах та тутăр йăмăкăм,
Шуçăм çути евĕр йăмăхăм,
Пуçа çыхса тухма пĕлем-ши
Е алла тытам-ши, явлăкăм?

* * *

«Нихçан та ан шутла çын тупăшне!» —
Тек хытаратчĕ ашшĕ ачине.
Анчах, эс кур-ха, пĕтĕм çут тĕнче
Шутлать халь Абрамович укçине.

* * *

Лăплантарма ан тăрăшăр мана.
Эп чакак мар, эп — чĕмсĕр тăмана.
Эсир пĕр харăс чакăлтатнă сасă
Акар йытти пекех тулать чуна.

* * *

Сар кайăк шăрататать шĕвви-шĕвви,
Янрат Анат каса, Сентти кĕвви.
Ыр çемĕпе çул уçăлса пырать,
Юр евĕр ирĕлет чăрмав тĕвви.

* * *

Мĕскер кĕтет çуралакан çынна?
Умра тумхах кĕтсе тăрать ăна.
Апла пулсан мĕскер вăл пирĕн пурнăç?
Тумхах кăна, туссем, тумхах кăна.

* * *

Çуралнă хыççăн çыпăçтарнăн çилĕм
Манран ниçта та уйрăлмасть хам вилĕм.
Ирĕксĕрех сиксе тухать ыйту:
Ăçта вара ман Турă панă килĕм?

*   *   *

Çынна пăхăнаймасть тĕнче йĕрки.
Пĕтет кĕçех ак пурнăç кĕнеки.
Пулсассăн пулĕ тепĕр çич хутлам...
Мĕн калаçас халь тин малаш пирки?

*   *   *

Çӳлтен кĕрпе тăкăннине кураççĕ,
Вара çавсем: «Мĕн ку?» — тесе ыйтаççĕ.
Чăн чăвашла! Эппин, чĕлхемĕр, эс —
Еççей вăхăтĕнчи сăмах хутаçĕ!

*   *   *

Турат-тĕретлĕ Атăлăн вăрри.
Ăçта чĕнет пире хасар юрри?
Услам кĕтсе сут тăвиччен, хăтаçăм,
Тура çерем уçса акар пăри.

* * *

Тӑванӑм, виҫ эрнелӗхе сана
Паян яраҫҫӗ урӑх хулана.
Пуҫна ан ус: ҫак ҫутӑ тӗнчене те
Эпир килетпӗр вӑхӑтлӑх кӑна.

* * *

Ҫын пулаймарӑн — ӳпкелен хӑвна,
Пӗччен юлсан — ятлатӑн юлташна.
Ӑҫта элчелӗн улшӑнми йӗрки?
Кам тӗплӗн ӑнлантарӗ-ши ҫавна?

* * *

Мӗнле хӑват ларать-ши ҫиҫӗмре?
Мӗскер арасланать аслатире?
Тен, пирӗнти кӑтӑрупа хаярлӑх
Ҫӗр тавралла тӑвӑлланса ҫӳрет?

* * *

Аннеçĕм, сăввăмсен йĕркисенче
Эп пĕрре мар юрларăм сан çинчен.
Анчах мĕнле-ха ним те тăваймарăм
Куçна хупас самантусем çитсен?

* * *

Ир кӳлĕм, кăнтăрла-и е çĕрле —
Ырăпала усал ялан пĕрле.
Паян усалĕ çиелте пулсассăн,
Ыран çавах ырри çĕнтермелле.

* * *

Ачам, инкек çитсе тухсан та чăт,
Вăй çитерсе ăна самантлăх йăт.
Вара эс пуç усманнине кура
Усал ăш-чикĕнче çухалĕ хăт.

* * *

Кĕл чечексем çинче мерчен тумлам типет,
Çут çăлтăр куçсенче — пехетпеле сипет.
Паян — çулталăкри чи чаплă вăхăт,
Тултар, сентреçĕ, чи паха шерпет.

* * *

Шер питлĕ шерпикем, ик куçунта — хĕлхем,
Çӳçӳ ылтăнланса тăрать сĕвем-сĕвем.
Ик черккере мĕнле пĕр пек шерпет,
Çапла пĕр пек умри шăпамăрсем.

* * *

Пире кĕтсе йăлтăртатать кермен,
Чунра та чĕрере хĕвелленет термен.
Эпир пĕр хĕм, пĕр сывлăш пулнине
Мĕнле пире нимскер те систермен?

*   *   *

Таçтан мана çурма саспа чĕнеççĕ...
Салам, Тур панă хӳхĕм кучченеçĕм!
Айта тухар та шăвăнар кунтан,
Эпир хĕвел те уйăх халь тĕнчешĕн.

*   *   *

Ахах-мерчен вăййи пек чаплă иçĕм
Йăлтăртатать ку шерпетре, савниçĕм.
Çĕклер, эппин, часрах, мĕн-ма тесен
Чунра ĕмрипелех çиçеймĕ çиçĕм.

*   *   *

Тăвар, чечекĕм, халăх йĕркине,
Илер хул витĕр йăлтăр черккине.
Вара шалтти хурар, çут уйăх куртăр
Шăпамăрсем мĕнле пĕрлешнине.

* * *

Эппин, шухăшласа пăхар-ха халĕ:
Ăçтан тухать-ши пурăнăç усалĕ —
Шыв тĕпĕнчен е вĕтлĕх варринчен?
Çук, хамăртах ларать ун мăк сухалĕ.

* * *

Ярăмланать ав шуçăм алăкĕ.
Чăвашăм, эс те тухăç халăхĕ.
Пуçăмăра таятпăр, Авиценна, —
Пирте — сар кун тĕнчин ăс-халлăхĕ.

* * *

Шираз тĕнчипеле çӳренĕ май
Гоклен йăхне пуç тайнă Хусанкай.
Çут уйăх пек пулса Махтумкули
Ăна калать: «Парнас тӳпи — сан шай».

* * *

Вăран, Хафиз — ак пирĕн Хурасан,
Кил, Саади — кĕтет ак Испухан...
Ахрăмăрсем Чăваш енре çӳреççĕ
Шираз кĕвви тăванлă пулнăран.

* * *

Мухтав, Омар ибн Ибрахим Хайям!
Сан çумăнта хама поэт теме епле хăям:
Çӳл тӳпери çăлтăрсене куллен шутла-шутла
Парнас çинчи çул çăлтăра эс çаврăнтăн паян.

* * *

Ăстампулта та çул шырать чăваш,
Катмандура та çул шырать чăваш,
Эх, малтанах пĕлсе тăрас пулсанччĕ —
Хăш кукăрта кĕтет пире малаш...

* * *

Кур-ха: çерçи улмуççи пахчинче
Çапать çунатне — шăпчăк евĕр юрласшăн.
Вĕчĕхçĕ сăвăç сăмах хăртнинче
Хура чунĕпе шурă сăвă çырасшăн.

* * *

— Аннеçĕм, каласамччĕ: мĕн вăл сывлăм?
Тен, вăл çаран ахах-мерченĕ пулĕ?
— Çук, эп шутланă тăрăх, ывлăм,
Вăл — кайнă ăрусен таса куççулĕ.

* * *

— Тăванăм, антологи йĕркелеççĕ,
Хăш сăввуна сĕнер яш ăрăва?
— Çамка çинчи тăвантă пĕркеленчĕк —
Пурнăçăмри чи витĕмлĕ строфа.

* * *

Пăшăрханатпăр, туялан туссемĕр,
Пăшăрханма чăнах та пур сăлтав:
Унпа эпир кĕрешрĕмĕр мĕн ĕмĕр,
Анчах... çап-çамрăках çӳрет Ултав.

* * *

Мехелĕмпе путатăп ыйăха.
Тав Туррăма çăкăрпала тăваршăн.
Курап: выç кашкăр çĕнĕ уйăха
Кăтра путек тесе туртса çурасшăн.

* * *

Мăйракасăр така пек мăкла ун сăмахĕ,
Йышăнаймĕ кĕсле ун кĕске хĕлĕхне.
Пурпĕрех çак этемĕн пур хăйĕн ахахĕ:
Вăл пĕлет чăштăр-чăштăр укçа чĕлхине.

* * *

Пикем, эс вутăш пек ишсе пыратăн,
Хăвна кăтра хум вăййинче куратăн.
Маншăн пулсан, хум ыталать сана,
Эс меллĕн ун ытамĕнчен таратăн.

* * *

— Ан пăлхансам, юратакан чĕре,
Мĕн-ма çаплах кĕретĕн эс чĕрре?
— Мĕншĕн тесен эп юратни, савни,
Вут пек шăранакан чĕрĕлĕхре.

* * *

Кала мана, Асанкасси пики,
Ăçта телейпеле инкек чикки?
Ĕнер санран хавaслă çын та çукчĕ,
Паян хурлн тупаймăн сан пекки.

*   *   *

Мана эс пĕр сăмах та каламарăн,
Каç-каç чĕре юрри те юрламарăн.
Пĕрре куçран пăхса илнипелех
Чунра хĕлхемĕн хĕмлене пуçларăн.

*   *   *

Пахчасенче пиçсе хуралчĕ иçĕм,
Тӳпесенче çиçсе ĕшенчĕ çиçĕм.
Эп çеç çунса тухас пек тунсăхлатăп,
Самантлăх та манăçайми савниçĕм.

*   *   *

Çил сана çупăрлать, кĕл чечекĕм.
Шыв сана ыталать, кĕл чечекĕм.
Манран çеç яланах, яланах
Пăрăнса эс çӳрен, кĕл чечекĕм.

* * *

Тĕттĕмлĕхре пĕр хуйхăччĕ тĕнчен,
Çутăлăхра çĕр хуйхă халь тĕнчен:
Çуллен шăртне çĕклет-мĕн океан...
Мĕнрен килет ку? Ăс тӳнтерĕнчен.

* * *

Тĕнчемĕр тăрринче пурах-ши Турă?
Ан ыйт манран эс ун çинчен, маттурăм.
Ырсем тăринччĕ тăнăç чĕрере,
Çав пархатар — сенкер тĕнчем те курăм.

* * *

Ăçта выртан эс, Хветĕр Михали?
Лăпкать-и тăпруна чăваш алли?
Тураттинчен инçе вĕçсе ӳксен
Пулать-мĕн çулçă çил вылямалли.

* * *

Ума хурса хӗрес ҫыруллӑ чӑкӑт
Аваллăх сассине тăнларăм, вăхăт.
Ҫак пушăт кăшăл тӗррипе утса
Йӗррў ҫине ўкетӗп пулӗ, Сăхăт.

* * *

Чупма пуҫланăскер хуллен, лўппер,
Кӗҫех мала вăл ўкрӗ чип-чипер.
Чăнах иккен «кайри — мала» тени,
Ҫавна кăтартрӗ пирӗн Илепер.

* * *

Мӗнре пире чипер усран халал?
Ăҫта каять яш чухнехи вăй-хал?
Ҫакна йăлтах пӗлсе тăрать аван
Шăртланă йӗтӗн евӗр шур сухал.

* * *

Саккун калать: «Эп — сутăнман хăват».
Анчах ăна вуланă виç ваккат
Пĕр чăнлăха виç тĕрлĕ ăнланаççĕ...
Поэт, эс мар-и чунлăхлă тахат?

* * *

Çĕн кайăк килчĕ — пуç таять чăваш.
Этем куç хупрĕ — пуç таять чăваш.
Çак икĕ аслă тивĕç хушшинче
Сипетлĕх сунталне туптать чăваш.

* * *

Сăвăçсенчен пĕри çырать виç кунлăх,
Теприн — хăй виличчен çухалмĕ чунлăх,
Тата тепри вара, Гомер пекки,
Сăмахĕпе палăк лартать пин çуллăх.

*   *   *

Пайтул, чĕтремĕ аллунта пăлат,
Пуç усмĕ çул çинче хушка Хăлат.
Йышра шанса пĕтми этем пурри
Чуна кушак чĕрни пек чăрмалать.

*   *   *

Пĕри алла юман чукмар илет,
Тепри тарса ўкме хатĕрленет...
Хăш чух вара, тăванăм, мухтани те
Усаллăхран хăтăлмалли меслет.

*   *   *

Ачалăхăм... Каллех эп çав класра.
Омсем те биномсем, тен, çук асра,
Алхаснăшăн çак кĕтесре тăни —
Яланлăх ман ăсра та ман чысра.

* * *

Пурнăçăмра — тирке е ан тирке —
Пурах вĕрентнине итлес йĕрке:
Пĕлесчĕ санăн, мăшăрăм, мĕнле
Мана тăн пачĕ алăри черкке.

* * *

Эй, Танăшăм, сана çырмаллă теççĕ,
Урамусем те кукăр-макăр теççĕ,
Апла пулин те тăрă кӳллӳнте
Пуян çынсем килсе шыва кĕреççĕ.

* * *

Калаçрăм эп Остер çăкипеле,
Калаçрăм эп Канаш йăмрипеле.
Шухăшĕсем ик енĕн те пĕр пек-мĕн:
«Ан тĕкĕнĕр, тархасшăн, Çеçпĕле».

* * *

Чапайӑмӑр, сан пулнӑ сумлӑ ӗҫ:
Вылянӑ аллунта сӑваплӑ хӗҫ.
Ҫав хӗҫ ҫинче ирпе юрлать сар кайӑк
Мӗнпур вӑрҫа чарас пекех кӗҫ-вӗҫ.

* * *

Мӗнпе виҫер, патварлӑх, сан вӑйна?
Мӗнпе виҫер, хитрелӗх, сан чапна?
Каларӗ шур сухал: «Виҫер, атьсемӗр,
Ку чыслӑха чун виҫипе кӑна».

* * *

Эс, Танӑш ялӗ, — айлӑм тӗпӗнче,
Цада аулӗ — ҫӳллӗ ту ҫинче.
Эпир вара, вӑтам шайпа пӑхсан,
Ҫав уйрӑмлӑх виҫин шӑп варринче.

* * *

— Ытти чӗлхесенче, ӑсчах, кала,
Ма Шупашкарӑн ячӗ урӑхла?
— Хула ятне пӗрремӗш ҫыраканӗ
Пӗлмен ни вырӑсла, ни чӑвашла.

* * *

Чӑваш, эс анӑҫра та, тухӑҫра та,
Сив ҫурҫӗрте те, ӑшӑ кӑнтӑрта та...
Тӑванӑмсем, ӑҫти Акатуйра
Пӗрле эп ыталам-ши пурсӑра та?

* * *

Эй, шурӑ ҫурт, ӳкерчӗк пек илем,
Чӳречинче ташлать хӗвел-хӗлхем.
Анчах та... шурӑ пӳлӗмне кӗрен те —
Лараҫҫӗ... йӑл кулма пӗлмен ҫынсем.

* * *

Инçетри çĕрсене çăтмахри пек мухтанăшăн,
Аякри шывсене ырлăх евĕр ырланăшăн,
Хурăн вутă хуманшăн тăван вучаха
Каçарсам ывăлна, тан таппи евĕр Танăшăм.

* * *

Шур кашкăр — тĕрĕк тӳпинчи элем.
Кун-çул йыхравĕ — чĕрери хĕлхем.
Мĕнле тытсан туллин эс кăларан-ши
Çак туйăма, аллăмăрти калем?

* * *

Ивник йĕрки ансат та кĕвĕллĕ,
Çавал енчи кĕсле пек хĕлĕхлĕ.
Пĕр сăввинче ав амăшĕн йĕки те
Юрра ярать ун çитмĕл чĕлĕхлĕн.

* * *

Çакна туйса тăма чĕремшĕн лайăх:
Пур ман пĕр кăсăя та пĕр сар кайăк.
Вĕсен чӳречери юррисемпе
Йĕркеленсе пырать кашни çулталăк.

* * *

Йăхташăмсем! Миттамăра пуç тайăр.
Вăл — сив кĕлрен çĕн хĕм кăларнă Тайăр.
Паян пире лекен пуçкăшăльсем —
Ун ячĕпе ешернĕ чĕрĕ лавр.

* * *

Шутларăм: шур кăрлач-шим чĕнтĕрленĕ,
Ман пӳлĕме асамлăн эрешленĕ?
Раштав та мар, кăрлач та мар, çунатăм,
Эс ман чунра хĕвел тĕрри тĕрленĕ.

* * *

Чечек патши — шĕл роза — аллăмра.
Кĕçех килте вăл пулĕ сан умра.
Аван! Анчах ялти утмăл турат
Мĕнле çаплах пурнать-ха асăмра?

* * *

Çемçе тӳшек пек пусă анĕнче
Куçне уçаççĕ тулă та пăри.
Калчамăра ирхи тăм сиввинчен
Сыхлать тăри юрлан сăпка юрри.

* * *

Ту тăрринчен ыйтсаттăм эп ир кӳлĕм:
— Кала, мĕскер тени пулать вăл ӳсĕм?
— Вăл — ĕç, шырав, пĕлӳлĕх, пултарулăх,
Тата, тăванăм, шăплăх евĕр тӳсĕм.

* * *

— Автанӑм, ма пӗрмай эс авӑтан,
Эп сӑвӑ ҫырнӑ чух, тархасшӑн, кан.
— Хуҫам, эп авӑтман пулсан этемлӗх
Вӑранаяс та ҫукчӗ ыйхӑран.

* * *

— Сан пурнӑҫна йӗрлеп те, кукамай,
Кукри-макри ай-хай ытла нумай...
— Атӑл атте улӑп шыв пек пулсан та
Ҫавах тӑвать ҫӗр кукӑр юхнӑ май...

* * *

Пурне те юрама тӑрӑшакан,
Ҫакна шута илмелле мар-ши сан:
Хӑвпа юлать-ши шухӑшун тымарӗ
Мӗн пуррине йӑлт валеҫсе парсан?

* * *

Халь-халь чаранасла сике-сике
Юртать юлхаввăн юр çинчи пӳске...
Раштав вĕçленнĕ чух чăваш хĕвелĕн
Ури мулкач ури пекех кĕске.

* * *

Чăваш енре пур çакăн пек кĕтес:
Унта телекурав яран та эс —
Ялан пуплет вăл çармăсла кăна...
Çакна мĕнле-ши ăнланма пĕлес?

* * *

«Çынна нихçан та ан ĕнен, ан шан», —
Тесе калатăн эс мана ялан.
Вара хăпса тусран та юлташран
Шанчăксăрри пулса юлас-им ман?

* * *

Хăй умĕнчен черетпеле иртӳçĕн
Çарне хуçа пек тĕрĕслет ертӳçĕ.
Çапла ман хамăн та пулас килет
Тăван чăваш сăмахĕсен кĕтӳçĕ.

* * *

Ёмĕрĕнче пин улмуççи лартса
Вăл пурнăç панă ӳстерсе, сыпса.
Кăçал вăл сыпнă туратсем каймарĕç...
Чĕри... пахчаçăн... ларчĕ чаранса...

* * *

Пăр пек сăмахшăн кăмăлсăр ан юл,
Шыври чул евĕр пăр айне ан пул.
Шыв шайĕнчен мĕн чухлĕ эсĕ çӳллĕ,
Çавна ăнлан та çăмăллăн ал сул.

* * *

Çынран ним пытарман хĕрарăмран
Шалт тĕлĕнсе çӳрерĕм эп кайран:
Иккен, хăпса ăшри вăрттăнлăхран
Вăл тасалать хăй тунă çылăхран.

* * *

Çулу, вут чуль тата тип-типĕ ăвă,
Майне пĕлсен, вут хыптараççĕ хăвăрт.
Ухсай йĕп вĕç пек пĕчĕк кунсенчех
Çырса хурать тĕнче пек аслă сăвă.

* * *

Каллех хытарнă евĕрлĕ урхалăх
Мăн пуçлăх тăн кĕртет пире çур талăк.
Тӳремĕр, эс тем пек çӳлте пулсан та
Ан ман: сана йăтса тăрать çак халăх.

*   *   *

— Мĕнле пырать, хăта, ĕçӳ-хĕлӳ?
— Çĕн йĕркелӳ, хăта, çĕн йĕркелӳ:
Авал услам ĕçне эп пит сивлеттĕм,
Паян пире — усрать суту-илӳ.

*   *   *

Кейĕве çеçкипе çупăрлать каштансар...
Эс ăçта, Кейĕве никĕсленĕ хасар?
Куçăма курăнать сакăр сий сĕмĕ витĕр
Сементер хулинчи çĕр чĕлхеллĕ пасар.

*   *   *

Пăлхар хăни, Еленков Лучезар,
Пире куçран пăхса шырать сăнар.
Унтан калать: «Эй, шурă Шупашкарăм,
Эс — пирĕн несĕлти парка тымар».

* * *

Шухăшăма сума сăвать ютри юлташ,
Анчах ăнланаймасть çумри чăваш.
Хăш чух, мĕн тăвăн, тăван мар тăван
Çич çын урлах тăсса парать лаваш.

* * *

Ытлашши мухтасассăн — пите те хĕретĕн,
Сивлесе хурласан — хирĕçӳлĕх чĕртетĕн.
Эп çакна асăрхарăм: ăспа хакăла
Кăтартмашкăн пулать итлеме пĕлнипе те.

* * *

Ӳксе арканнă кантăк пек ваклантăмăр,
Пĕрне-пĕри вакка яма хăтлантăмăр.
Пуçа инкек килсе çапсан кăна
Пирте пĕр юн вылянине ăнлантăмăр.

*   *   *

Вуларăм пытару сехетĕнче
Çак çырăва масар кĕнекинче:
«Паян эс тантăшна кунта ăсатрăн,
Кĕç ху та пулăн çĕр ытамĕнче».

*   *   *

Йăмрам, чи çӳллĕ туратту çине хăпартрăн,
Ача чухнех эс Шупашкар кăтартрăн.
Халь хулари вун иккĕмĕш хутран
Хам ăнтăлатăп сан енне хăлатăн.

*   *   *

Утатăп Шетмĕ хĕррипе. Хăйăртĕвӳ,
Ĕмĕр сассийĕн илтĕнет кĕввӳ.
Пĕр пĕрчĕ йăл! çиçсе пăхать куçран.
— Кам эсĕ?
— Эп пулап сан ĕмпĕвӳ.

* * *

Шыв кĕввине итлеп те пĕр кана,
Сан арыкна куратăп, Фергана:
Çӳл тӳперен парашютпа анусăн
Эс йышăнан Желтухин Германа.

* * *

Малашлăха май пур-ши çип çапмашкăн,
Кайран çав йĕрпеле кăна утмашкăн?
Май çук-тăр çав... Мăн юхан шывăн та
Çич хут тивет çулне улăштармашкăн.

* * *

Ыраш çăкри — тутлăхĕпе патша,
Кĕл чечекре — мухтатпăр хĕм-шăрша.
Сан, ылтăн, ни туту çук, ни шăршу,
Мĕнпе-ши хаклă эсĕ, апăрша?

*  *  *

Мĕн кĕçĕнрен параççĕ аслă пил:
Тăван çĕршыв, ял-йыш, çуралнă кил...
«Тăр çавăншăн пуçпа та пурнăçпа», —
Çапла калать пире Муса Джалиль.

*  *  *

Çĕр чăмăрĕ хĕвеллĕ ункăра,
Апла пулин те çулĕ ун кăра.
Епле сана мухтатчĕç, ырă çыннăм,
Паян вара эс — тĕттĕм сулнăкра.

*  *  *

Калаççĕ: «Ĕмĕр вăрăм, кун кĕске».
Ман еннеллех вĕçет хура пӳске.
Калле тапса ямашкăн вăй та пур пек,
Анчах, туссемĕр, кунĕ иртрĕ-çке...

*   *   *

Çыранри сар пуç — хĕвел çаврăнăш
Çавалтан ыйтать: «Эс мĕн тарăнăш?»
Шыв калать ăна: «Каçхине сăна,
Çăлтăрсем каллех пурте таврăнĕç».

*   *   *

Атăлах та хĕрри сарă тăм,
Вĕршĕн евĕр вĕçсе ларăттăм.
Хăçан ўкессине пĕлес пулсан
Тўшеккине малтан сарăттăм.

*   *   *

Çĕрме пуян çынна мĕн кирлĕ?
Мулĕ çумне хушма мул кирлĕ.
Тарпа пиçнĕ хура халăха
Ялта ял пек пулма чун кирлĕ.

* * *

Таса илем кўрсе пур вăхăта
Капелла пек ларатчĕ шур ката.
Кунта халь — пин сăвай пек хурăн тĕпĕ
Тата ак эпĕ, тепĕр тунката...

* * *

Айăпа кĕнине ăнланса йышăнатăп,
Каçарап тенинчен яланах эп хăратăп.
Ма тесен çылăха çăмăлпа каçарни
Курăнать çĕнĕрен çĕкленес вăй-хăватăн.

* * *

Сулахай аллупа эс иртнин хĕлĕхне карăнтар,
Сылтăммин мелĕпе килес кун тĕшшине сыпăнтар.
Кирлине йышăнса юттинчен хăтăлма хăнăхсассăн,
Çамрăк тусăм, пулать пурнăçра пархатар.

* * *

Афган тăвĕсенче мĕскер шырарăмăр,
Сар хăйăр хирĕнче мĕскер суйларăмăр?
Чĕнмен çĕре пуçна ан чик, тархасшăн,
Текен инкек картне чунра хăвартăмăр.

* * *

Вĕри... вĕри... Тӳсмешкĕн çуккă чăтăм...
Хускалмиех-шим шанчăкăм-çунатăм?
Чим, юрă килчĕ ак... Хам çырнă юрă.
Йăл кулчĕ, ыталарĕ... Эпĕ тăтăм.

* * *

Кăвак тĕтĕм каять çӳлелле,
Кĕл, сивĕнсе, кĕрет çĕрелле.
Пире кĕтекенĕ те çав мар-и:
Ӳт — масара, чунĕ — вирелле.

* * *

Мухтав Турра: чунра пурах-тăр сисĕм:
Кăшт каялла чакма çитертĕм тӳсĕм.
Ята яман, чыса та çухатман пек,
Калле чаксах, тен, пулчĕ пĕчĕк ӳсĕм?

* * *

Вăй вылякан шывсен çĕн варĕ
Таса уя икке пайларĕ.
«Сана çĕнтертĕм эп, этем!» —
Тесе вăл тахçанччен шавларĕ.

* * *

Сĕм çĕрлехи ĕçе ир йĕрлени
Кăклайĕ-ши пирти усаллăха;
Мĕншĕн тесен каç мĕн пулса иртни
Тул çутăлсан тухать вăрттăнлăха.

* * *

Ырма-канма пĕлмен чăвашăм,
Каллех эс çав юррах пуçласшăн.
Ăнлан, тăванăм: хушăран
Эп шăплăх сассине тăнласшăн.

* * *

Иртсе кайнă кунран ăраскал кĕтесси —
Шухăшран шăратас шурă пўрт кĕтесси.
Ах, пулать-мĕн çынра хăйне майлă чăвашлăх:
Кайса ўкнĕ çынна та тапса иртесси.

* * *

Анăçалла пăхса пуçа таяр-и,
Иртен куна ăшпиллĕн тав тăвар-и:
Хутса кăларнă кăмака шăраннăн
Хĕмне сапса выртать хĕвел кăварĕ...

* * *

Кĕрхи йĕтем тӳпемĕ евĕр кăкăр,
Ыр шухăшсен çулне кăтартнă çăлтăр,
Таса ăнтăлусен сӳнми хăвачĕ —
Ак мĕн пулать вăл, тусăмсем, çĕн çăкăр.

* * *

Этем ĕмриййĕн тăсăмĕ — пĕр аршăн.
Мĕн-ма чĕрре кĕретпĕр кирлĕ маршăн?
Ак пыл. Ак çу. Ак пĕр ӳпкевсĕр чунăм,
Кӳр аллуна. Лар юнашар, тархасшăн.

* * *

Ан такăнсам, ачам. Ир такăнсан — каçчен
Мăн çул çинче выртса юлан пĕччен.
Каллех нумай асапланмашкăн тивĕ
Кайри мала пулма май киличчен.

* * *

Сулахайра сăрт-ту, сылтăм енче — ахрат,
Хăлатăм-урхамахăм, ан хартлат,
Сирсе уçми танатаран тухсассăн
Пике çакать мăю çине нухрат.

* * *

Мухтавлă Кăпрат ханăн пуканне
Пуç тайрĕ аслă кинĕ, Пукане.
Çавна туйса пиллет Çӳлти Аттемĕр
Ăспа-чыспа Аспарухсен çулне.

* * *

Умна ахрат çырми тухсан — эс пăрăнтăн.
Çулна капмар сăрт-ту пӳлсен — эс çаврăнтăн.
Хаяр çил-тăвăл хупласан — эс таврăнтăн.
Пике ачашшăн йăл кулсан — эс парăнтăн.

* * *

Вăтакас варринче вальс ташлать çавра çил...
Вăтакас варринчи варкăшра — сирĕн кил.
Вăтакас варрипе, савнисен умĕпе
Вăтанан чунăма илсе каç, çавра çил.

* * *

Урамалла виçĕ кантăк,
Карнис çинче çич чĕкеç.
Кунĕсем нумай пулсан та
Ĕмĕр тени пĕрре çеç.

* * *

Паланшăн мĕн? Юр çутăр та, кĕрт хывтăр, —
Чăн-чăн кĕрнек пухать вăл сивĕре.
Çавăн пекех, тăванăм, юрату та:
Ытамра мар пиçет, тĕрĕслевре.

* * *

Сунатпăр пĕр-пĕрне телей те сывлăх,
Çӳл тӳперен çăвинччĕ тетпĕр ырлăх.
Шăпах çав ырлăха кĕте-кĕте
Тӳпемĕр умĕнче тăватпăр çылăх.

* * *

Студентăм, эс хитре ларса пыратăн,
Çумра — мучи тăрать аран-аран.
Эс хăвăн лармаллах тесе шутлан тăк
Чуну сан ватăрах пуль ват çынран?

* * *

Мучи, пĕрмай кутамккапа хутлатăн,
Тен, çак меслетпеле пуйма шутлатăн?
Ку çĕклеме хывса пăрах, тархасшăн,
Унпа... мăнук чури пек курăнатăн.

* * *

Хӳхĕм ода шăратрăн — тавсси!
Çĕн сонет шăрçаларăн — тавсси!
Юратма пĕлекен сăвăç тивĕçĕ —
Сар хĕрсен илемне мухтасси.

* * *

Кĕсйӳ пушанчĕ — пĕртте ан кулян,
Ĕçӳ ăнсан каллех тулать вăл сан.
Тус пулнă çын хăвна сутса ярсассăн
Мĕн тумалла? Виç кас эс шухăшлан.

* * *

Мĕнле халпа тăрать çавра тĕнче,
Мĕн килĕ çулăн çĕнĕ кукринче?
Пикеçĕм, ан шутла эс ним çинчен те,
Пуласлăх — кĕçĕрхи ытамсенче.

* * *

Сиссе юлмарăм — каçрăм утмăл урлă,
Кĕçех çитеп, тен, çĕн çыран патне.
Унта каллех эп çепĕç юрă юрлăп, —
Яш çыншăн çеç килет-им çуркунне?

* * *

Укçа кăна, укçа ай тееççĕ,
Укçа çине укçа тиеççĕ.
Анчах ямăт укçа вылявĕнче
Чунлăх çухалнине сисмеççĕ.

* * *

— Хĕрĕнкĕлле шăпрах калаç, тăхлачă,
Милицисем килсе тытса каяççĕ.
— Суратăп эп милицисем çине,
Мана поэт... ХĂЙ çуттине сыптарчĕ!

* * *

Туянтăм гладиолус — тивĕçтермест паян.
Халь илтĕм шурă лили — хам вăтанап хамран...
Мĕскер тăвас-ха манăн, савниçĕм, сар хĕвел,
Эс ху пур чечекрен те илемлĕрех пулсан?

* * *

Куçу аса илтерчĕ утмăл турат хĕмне.
Çӳçӳ аса илтерчĕ çӳçе кăчкин сĕмне...
Кил хăвăртрах, хĕвелĕм, кил, уйăхăм, часрах,
Тӳпемĕр хатĕрленĕ пĕркенчĕк-витĕмне.

* * *

Авăнсам-и, авăнсам-и, авăн уйăхĕ,
Акă вăл кĕрхи кунсенĕн акатуйлăхĕ!
Юлчĕ-и, юман хăма, санăн авăнăç?
Аслă туй пулса килет пирĕн савăнăç!

* * *

Сарă кайăк çитрĕ сумлă ирхине,
Тăсса ячĕ хăйĕн хӳхĕм юррине.
— Таврăнтăн-им, яшлăхăм, çил çунатăмçăм?
— Лăплантар, поэт, инфарктлă чĕрӳне.

* * *

— Поэзире юлас тесессĕн ĕмĕрлĕх
Мĕн шутланать-ши, Сементер, тĕп кирлĕлĕх?
— Пĕр пайĕ — хусанкайлăх та ухсайлăх,
Ытти виç пайĕ — пĕтĕмпех хăв евĕрлĕх.

* * *

Апаш улăхĕнче — шăв-шавлă ушкăн,
Чикан юрри янрать хĕлхемлĕн, шуххăн.
Вут-хĕм сапан Земфира çумĕнче —
Тăра парать Раççей элемĕ Пушкин.

* * *

Ăçта эс ĕрĕхен, ăштахсăр халăх?
Мĕн кӳрĕ-ши сана тӳнтер васкавлăх?
Капла эс хăвăнтан иртсе кайсан
Кун çитĕ-ши телей курса юлмалăх?

* * *

Курас килетчĕ халăнти ĕнче
Хĕмленекен сăмах ӳнерĕнче.
Анчах та эсĕ ывăна пĕлми
Тапаçланан çăхав жанăрĕнче.

* * *

Виç кун йĕпхӳ çăвать пĕр виçепе.
Ман шухăшпа, ташлать вăл дактильпе.
Мĕнле ăна йăлăхтармасть çав çемĕ?
Çăвинччĕ амфибрахи кĕввипе.

* * *

Каланă теççĕ Ярослав Галан:
«Çырмашкăн лар вĕр çĕн çи-пуçпалан».
Эп тăхăнтăм та тĕрĕллĕ кĕпе —
Сĕтел ыйтать: «Ăçти туя каян?»

* * *

— Тăванăм, мĕн сана каплах тулларĕ —
Упа тустарчĕ е машин таптарĕ?
— Çук, тусăм, ăшăмра капланнă тăвăл
Хамах тĕрме унки пек кăшăлларĕ.

* * *

Тĕрĕс мар пурăнатăн, этем.
Ахальтен-им чĕтреççĕ çĕрсем,
Ахальтен-им шывсем пăлханаççĕ,
Тăкăнаççĕ çӳлтен çăлтăрсем?

* * *

Мана мăнукăм ячĕ шухăша:
Пĕтме памастпăр, терĕ, чăваша,
Анат енче ав çиçĕм-хĕçĕпе
Пĕр вăй пулма чĕнет Аттил патша.

* * *

Ĕçлевçĕ августăм, çуллен-çулах
Пучах пиçсессĕн эс тытан çурла.
Тата... шӳтлен те эс кăштах: сан пур
Пире пан улмипе перес йăла.

* * *

— Мĕншĕн эс яланах улталатăн-ха, Жанна,
Эх, епле-ха сана эп ĕненнĕ те шаннă?
— Эс аваллăх мĕнне ăнкаратăн пулсан —
Гера хăй те Зевса вĕçĕмех улталанă.

* * *

Чăвашла тăхăнать, чăвашла калаçать,
Чăвашла мухтанать, чăвашла ятлаçать...
Йăлăхтарчĕ пире вăл çапла хăтланни,
Ма тесен — чунĕпе урăх халăх çынни.

* * *

«Ача чухне ай-хай кăтартрĕç шар», —
Тесе пăшăрханать паян Акшар.
Ăçтан пĕлес: нуша курман пулсассăн
Тухатчĕ-ши унран çак селĕм ар?

* * *

Сӳсрен эрешлĕ явнă çак нăхта
Пит килĕшет ĕçри маттур ута.
Çынна мухтас мехел çитсен, тăванăм,
Тархасшăн, виçине пĕлсе мухта.

* * *

Шур сухалсем çӳлелле пăхаççĕ,
Шур сухалсем тĕрĕслĕх шыраççĕ.
Анчах хĕвел анса ларсанах
Кун çутине хуплать тĕттĕмлĕх влаçĕ.

* * *

Ан кала юрату сӳнсе ларчĕ тесе,
Ан кулян юрату иртсе кайрĕ тесе.
Юрату вăл сӳнмест, вăл хăш чух тĕлĕрет,
Вăл кĕтет уçă варкăш вĕрсе чĕртессе.

* * *

Кăвар чечек тататăп. Сан валли.
Хĕлхем сăмах шыратăп. Сан валли.
Кĕтрет кĕвви хыватăп. Сан валли.
Телей тĕрри тĕрлетĕп. Сан валли.

* * *

Хӗвел пек тусӑм, чун ҫӳллӗшӗнчен
Йӑл-йӑл кулсам сенкер чӳречӳнтен:
Кӑвар хӗлхемӗ шанчӑклӑн упранӗ
Тепре телей саманчӗ киличчен.

* * *

Ҫутӑпи сар хӗвел куллине пытарасшӑн,
Ҫӑлтӑрсен ҫиҫӗмне кӳлӗре путарасшӑн.
Хӗр пӗрчиҫӗм, ӑҫтан пытарайӑн чунна,
Юрату куҫӑнта ҫеҫкеленнӗ пулсассӑн?

* * *

Хитрелӗхе ырӑлӑхне памасӑр,
Тен, ҫут ҫанталӑк тӗрӗс тунӑ ахӑр:
Каланӑ-ҫке: «Чӑн тупрана тупма
Ҫамка ҫине тар тухиччен ҫӗр чавӑр».

* * *

Чуна хӗвел шевли пек вылятма
Эп çамрăк чух тухаттăм урама...
Халь катемпи туса лартма юрать
Ана çине... Çерçи хăвалама.

* * *

Асапӗ, тен, çитмест пуль чăваша?
Ахальлӗн тухас çук вăл йăваша.
Пӗрне пӗри çиме пăрахмасан
Кам тӳрлетейӗ пирӗн йăнăша?

* * *

Пурнас тесессӗн хамăрла ăспа
Юратăва ан йыхăр эс саспа:
Ик чун вăрттăнлăхне алран ярсан
Пăтрашăнса каятăн вырăспа.

* * *

Пĕрре умран вĕçсе иртен чĕкеçĕн,
Тепре çурхи хĕвел шевлин çиçетĕн...
Мĕнле майпа çав çăмăллăхпалах
Мана эс йывăрлăх кӳрен, çеçкеçĕм?

* * *

Чĕр палăк пек тăратăн умăмра...
Çеçке пек çурăлатăн чунăмра.
Ярса пуссам ман еннелле пĕр пусăм,
Эп çичĕ утăм тăвăттăм вара.

* * *

Пĕлеймĕн Çӳл Хуçа çулне-йĕрне.
Кĕме пултарайсан ун керменне
Эп ыйтăттăм хам ĕмĕре тăсмашкăн...
Анчах мĕнле çĕкленĕн ун шайне?

* * *

Шывра путмасть теççĕ мана —
мĕн калама пĕлес?
Вутра çунмасть теççĕ мана —
мĕн калама пĕлес?
Кунта çакна эп тивĕç калама,
телейĕм,
Эп мар вăл путманни те çунманни,
вăл — эс.

* * *

Туссем, ан йĕрĕр,
шеллĕр хăвăра та,
Куççульпеле çынна
епле вăратăн?
Каймаллипех каймастăп-çке,
куратăр, —
Хам вырăна эп
юрă хăваратăп.

* * *

Хӗвел пайӑркинчен парне ҫакасшӑнччӗ —
пулмарӗ.
Хам ҫӑлтӑра ҫӳл тӳпене ярасшӑнччӗ —
ҫунмарӗ.
Ӗнтӗ каятӑп, тӑвансемӗр, уйрӑлса,
Эс юлччӗ, юррӑм, — кӳтнӗ чун тымарӗ.

* * *

Малтан эрех ӗҫтерчӗҫ хуҫана,
Кӗҫ ал пустарчӗҫ хӗрӗнкӗ ҫынна.
Эрнеренех эс парӑмра тесе
Саккунлӑн хуптӗрлерӗҫ айвана.

* * *

Юратуран ҫуралнӑ акӑлчан.
Яппун, китай — йӑлтах юратуран.
Ӑҫтан-ха хирӗҫме сӑлтав тупатпӑр
Чӑн-чӑн аннемӗр юрату пулсан.

* * *

Раççей — аннемĕр, Атăлах — аттемĕр,
Чăваш та çармăс — сирĕн ачăрсемĕр.
Шăпа — Çӳлти Аттемĕр аллинче...
Çапах та мĕншĕн кĕскелет-ха ĕмĕр?

* * *

Çын тĕнчене килсе кайни — пĕр авăк:
Яр уçăлать те хупăнать çав алăк.
Эппин, тăванăмсем, мĕн хирĕçес?
Çеçке пек çурăлса илни — хăналăх.

* * *

— О, Сементер! Аса илтерĕн, тен,
Пире хасар аваллăхĕ çинчен?
— Хасар çинчен пит нумаях калаймăп,
Эп хам — пăлхарпала сăвар енчен.

* * *

Калатпăр: «Чăмăртанăр, чăвашсем!
Пĕрлелĕхре — чăн чăвашла илем!»
Анчах хуплать, хуплать чĕлхемĕре
Çич тинĕс леш енчи хура хĕлхем.

* * *

Тарас Шевченко чăрсăр тапхăрта
Çапла çырса хурать Шупашкарта:
— Ай-ай кунта чиркӳ ытла нумай,
Кам чунĕшĕн лартаççĕ, тупата?

* * *

Хăйăр чулпа хăйранă айпăлта
Çĕн уйăх пек çиçсе пырать малта.
Ах, ĕçĕ касăлас еннех çитменччĕ,
Çути хăех тартинччĕ çич юта.

* * *

Упи енчен хуллен анать Кӑтрак.
Ӑйрин ҫилхи те хӑй пекех кӑтра.
Саламалик, чыс та хисеп, Тӑракӑм,
Эс хан ятне усратӑн халӑхра.

* * *

Кашни пӗр кун — хӑй майлӑ ӑспару.
Эс халь инҫе, тӑванӑм Аспарух:
Лашу ёҫет сенкер Танай шывне,
Ҫут Атӑлта вылять-ҫке сӑнару.

* * *

Эй, ёмпиччем, Баянӑм-Бадбаян,
Хӗвел ҫине пӑхса илсем паян:
Ун варринче вут-хӗмлӗ ялтӑр ҫутӑ
Пулса ҫунатӑп хамӑр ятпалан.

*   *   *

Христос шывне кĕртен Кăпрат хана
Пăлхар-сăвар хисеплĕ яланах.
Эпир — ун пĕртăван ывăлĕсем —
Пĕр шухăш, пĕр тĕрек, пĕр самана.

*   *   *

Миçе-ши пулчĕ çылăх? Ан шутла.
Мухтав Турра тесе кăна кала.
Куратăн-и, кĕркуннехи вăрман
Çылăхсене витет ылтăнпала?

*   *   *

Мĕскершĕн тĕрĕс мар выртать минтер?
Мĕн-ма патшан та кĕрĕкĕ тӳнтер?
Раççейĕн çитмĕл çичĕ ыйтăвне
Кам тĕрĕсрех хуравлĕ, Сементер?

* * *

Паян кун ак каллех тĕрĕслев.
Тен, ыран килĕ тĕп кĕрĕслев?
Пурăнасчĕ, чипер пурăнасчĕ
Ик алла хуриччен хĕресле.

* * *

Тӳнтерле ĕçлекен укçа
Пăтратать анăça-тухăça.
Ахальтен-им хăрушă хуçасăрлăх
Раççейре пулса тăчĕ хуçа?

* * *

Хăйсенчен хитрисене юратмаççĕ.
Хăйсенчен ăслисене çул памаççĕ.
Хăраççĕ хăйсенчен вăйлисенчен —
Часрах такăнтармашкăн май шыраççĕ.

* * *

Пăхатăп та: кăрлачăн урхамахĕ —
Пăлхар-сăвар йĕкĕчĕсен юмахĕ.
Ытах тухас та йĕнерлес пулсан —
Хапха уçса хурать тĕнче çăтмахĕ.

* * *

Масар... Кунта пĕр пек Çӳлти Аттемĕр
влаçĕ,
Унтан иртме пĕри те хăяймаççĕ.
Поэт, тиек, сухаçă, шăпана
Сисмесĕрех хура тăпра пулаççĕ.

* * *

— Пурăнатăр ямăт ырлăхсăр,
Ялти ятăр-шывăр шырлăхсăр...
— Тĕнчи çылăхран тăрать пулсан
Пирĕн мĕнле юлас çылăхсăр?

* * *

Пĕр хапхипе кĕрет хитре пăлхар,
Теприйĕнчен — аварпала балкар.
Кунакăмсем, асри тăванăмсем,
Ятуллă несĕлсем пек пĕр пулар.

* * *

Эй, уй-хир! Ăшăмра ярăмланчĕ хĕлхем:
Машинран эп юлам та пĕчченçĕ иртем.
Çакăнта çыпăçсаччĕ çума куршанакăм,
Çакăнтаччĕ анам, чи пĕрремĕш кĕлтем...

* * *

Ан тив, килес хĕвел кĕтретĕн килтĕр,
Çĕн уйăх çĕн телей алки пек çиçтĕр, —
Ыран тухса утас çул-йĕрĕме
Курап эп хамăр ял çăлкуçĕ витĕр.

* * *

Эс аякра манран, тăван çăлкуçăм,
Çавах шăнкăр сассу умри пек уçă.
Аван куратăп: ыталать сăнна
Ярăмланса тухан хĕвеллĕ шуçăм.

* * *

Вăй илтĕрччĕ тесессĕн çунату
Малтан çынсемшĕн ырă ĕç эс ту.
Хăй тивĕçне кашни çапла курсан
Çурхи кун пек ешерĕ юрату.

* * *

Айăпăмсен те çылăхсен кĕперĕ
Çамрăк чухне умран кая пĕлмерĕ.
Ӳкĕнĕве ĕçпе саплаштарма,
Туссемĕр, ĕмĕр тăршшĕ çитеймерĕ.

* * *

Виç вăй мĕн тупăшнă яланлăх.
Пĕрремĕш парăнать пуянлăх.
Унтан илем калле чакать.
Пурне те çĕнтерет... сăпайлăх.

* * *

Кăлăхах, Тимукăмăр,
Саншăн алă йăтрăмăр.
Курăр-ха, чипер çынран
Сысна туса хутăмăр.

* * *

Эрхип Энтри черкке юрататъ:
«Черкке вăл, — тет, — туйăм вăрататъ».
Ах, эрехĕ шурă тĕсĕпех
Энтрисене куллен хурататъ.

* * *

Пĕр йăпăлти мухтать пуçлăха,
Унăн сăмси çинчи куçлăха.
Леш, пыллă пылака хăнăхнăскер,
Тухнăçемĕн тухать пуçтаха.

* * *

Пур ырлăха ху еннелле туртмашкăн
Ан хĕртĕнсем, эс тивĕç ăнланмашкăн.
Мĕн курнасса пĕлмесĕр иртĕхнишĕн
Тăхăмусен тивет явап тытмашкăн.

* * *

Якку тĕл пулчĕ пĕрмĕш арăмне:
— Пĕрле ларар-и, — терĕ, — кил умне?
— Юрать, — тет ку. — Анчах ăçта чикен
Çич мăшăрун шăрçа пек ярăмне?

* * *

Пĕри ялан шутлать сăвап çинчен,
«Ырăпала калаçчăр, — тет, — вилсен».
Кам курĕ-ши чăн пурнăç ырлăхне
Ялан лери çинчен ĕмĕтленсен?

* * *

Ик хут хушса пама пулса кайран
Суйса укçа пуçтарчĕç халăхран.
Пĕри пӳртне сутса пая кĕрсеччĕ, —
Ав урамра ларать вăл, ху куран.

* * *

Аха, çакланчĕ мăнтăркка партас, —
Эппин, часрах туртас та кăларас!
Ак тухрĕ сирпĕнсе вăлта çиппи —
Унта çапкаланать юман турпас.

* * *

Çын пăтрататать çĕр чăмăрĕн ăшне,
Ватать тĕнче пиевĕн сывлăшне.
Тӳнтер ĕçпе хальхи этемлĕх ăсĕ
Пĕле тăркач пӳлет хăй малашне.

* * *

Мухтатăп Сарапай пек çынсене!
Вуларĕç те Аттай сăввисене —
«Чăваш» тесен кӳренекен министр
Чавтарчĕ кĕнеке лавкки енне.

* * *

«Президиумсенче лараттăн», — тетĕр эсĕр,
Кунта, туссем, çакна шута илсемĕр,
Ăнланăр: хăшĕсем унта вăйпа лараççĕ,
Эп ларнăччĕ... пачах ларас килмесĕр.

* * *

— Пурнан Атăл атте çыранĕнче,
Республикăмăр шĕкĕр хулинче.
Ларан пуль-ха яваплă кантурта?
— Ĕçлеп чăваш чĕлхин хуралĕнче.

* * *

Ял ячĕпе тесен — Çĕн Йĕкĕтре
Çăл тараси тăрна пекех хитре.
Шыв ăсаканпала пуплет хавассăн
Улăп тăрнан тӳр мăйĕнчи витре.

* * *

Парнас — йăлтăртатан поэзи тăвĕ.
Ылтăн парса туянтăм чаплă ăвă
Çӳлти хĕмрен вут тивертес тесе,
Çавах... çырăнаймарĕ кĕтнĕ сăвă.

* * *

Ма кулянас, тăванăм, ма макрас?
Поэт вăл — калама кăна канас:
Кашни кунах вĕçсе пымасть Пегас,
Хăш чух... ашакĕпе те çырлахас.

* * *

Çут тĕнчери чи чаплă сăвăç — Дант.
Ун пек пулма, ачам, ан ту эс ант, —
Пиртен килмест шăпа туртас тени,
Талант вăл — Çӳл Тӳпе суйлан самант!

* * *

Çта Яккусен? Упаçырмийĕнче.
Эйзин, Çăлкуç — редакци кӳлминче.
Хусанкай пек хăш Петĕре курар-ши
Депутатри арсен ларăвĕнче?

* * *

Тӳперен юр анать илтĕнми юрăпа,
Пур тавра çĕнелет Пукраври ырăпа.
Мамăк витнĕ тумпа, мамăк витнĕ сăнпа
Эс шур акăш паян, ытарми шур аппа.

* * *

Малтикаса шукăльленсе утмах
Туянтăм терĕм эпĕ çĕн уртмах.
Ĕç-пуç каллех шутланă пек тухмарĕ,
Çав хĕр курсан каларĕ тет: «Ухмах...»

* * *

Кĕтретĕмçĕм! Куçна эс ан йĕпет,
Эпир пĕрле! Эппин, тытар шерпет.
Кун-çулăн хурипе шурри нумай,
Асра юлинччĕ паянхи сипет.

**Юрий Семенович Семендер**

**ÇИÇĔМ САПАКИ**

**РОСЧЕРК МОЛНИИ**

Редактор *В.Н. Алексеев*
Художник *С.А. Бритвина*
Художественный редактор *Г.С. Самсонова*
Технический редактор *Л.К. Егорова*
Корректоры *З.И. Гаврилова, Н.Н. Маслова,*
*Н.В. Вечеркина, Н.Г. Орлова, Е.П. Казакова*
Компьютерная верстка *Л.К. Егоровой*

Подписано к печати 16.01.09. Формат 70x108 1/32. Бумага офсетная. Гарнитура Тип Таймс. Печать офсетная. Усл. печ. л. 9,8. Уч.-изд. л. 4,56. Тираж 1000 экз. Заказ № К-42. Изд. № 4.

ГУП Чувашской Республики «Чувашское книжное издательство»
Минкультуры Чувашии. 428019, Чебоксары, пр. Ивана Яковлева, 13.
Отпечатано в ГУП «ИПК «Чувашия»,
428019, Чебоксары, пр. Ивана Яковлева, 13.

Юрий
СЕМЕНТЕР



**Юрий Семенович Сементер**

1941 çулхи кăрлачăн 2-мĕшĕнче çуралнă. Çар хĕсметĕнче тăнă. И.Н. Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университетĕнчен вĕренсе тухнă. 1974–2005 çулсенче «Ялав» журналăн тĕп редакторĕнче ĕçленĕ. Шупашкарта тата Мускавра 20 ытла кĕнеке кăларнă. Чăваш халăх поэчĕ.